*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЮН КУН

52 (2464) 1
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

2014,
утă, 9

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

## Чысра – ĕçченлĕх, пултарулăх

Тихвин ярмăрккин уявĕнчи Акатуйра Çĕрпӳ районĕн çĕр ĕçченĕсем тулли кăмăлпа савăнчĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Сергей Артамонов асăннă тăрăх – пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене 20002 гектар акнă. Çакă пĕлтĕрхи шайăн 111 процентне танлашнă. Ял хуçалăх культурисене пĕтĕмпе 28021 гектар çинче акнă тата лартнă.

Çĕрпӳсен уявне хутшăннă Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев районта ырă улшăнусем вăй илнине палăртнă. Çакă тата та хĕрӳллĕрех ĕçлеме хавхалантармалла. "Çĕнĕ меслетсемпе, технологисемпе усă курса малалла талпăнмалла", – тенĕ вăл.



Сăн ӳкерчĕке www.cap.ru сайтран илнĕ

Çапла тума пултаруллă хресченсем те, ытти тытăмра тăрăшакансем те хатĕр. Тĕслĕхрен, Александр Журавлевпа Евгений Матвеев тин çеç ĕçе пуçăнакан фермерсене паракан пулăшăва – гранта (пĕр миллион ытла тенкĕ) – тивĕçнĕ. Районти чи лайăх механизаторсене сумлă уявра хĕрлĕ хăю çыхса янă, укçа парса хавхалантарнă. Çакăн пек чысланă хыççăн епле ӳрĕк-сӳрĕк ĕçлĕн? Ыттисен те вĕсем пек пулас килет мар-и?

Хисепĕн çӳллĕрех пусми çине хăпарнисем те сахал мар. "Авангард "Цивильский бекон" пĕрлешӳĕвĕн филиалĕнче выльăх пăхакан Галина Сергеева оператор кăçал "Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн хисеплĕ ĕçченĕ" ята тивĕçнĕ. Нумай çул агропромышленноç тытăмĕнче тăрăшса вăй хунăшăн республикăн Ял хуçалăх министерствин финанспа кредит политикин тĕп специалист-экспертне Алевтина Андреева, Çĕрпӳри ветеринарипе санитари завочĕн директорне Владимир Григорьева, Çĕрпӳри аграрипе технологи техникумĕн директорне хуçалăх енĕпе ĕçлекен çумĕ Анатолий Степанов Раççей Федерацийĕн Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине илнĕ. Ытти наградăсене тивĕçнисен йышĕ те пысăк пулнă.

Çĕрпӳ ĕçченĕсем Акатуйĕнче те, вице куна пынă ярмăрккăра та чун ăшшипе йĕркеленĕ куравсене, музыка фестивалĕсене, спорт ăмăртăвĕсене йыхравланă.

Республика ертӳçи вĕсенчен чылайăшĕпе паллашнă хыççăн хĕрарăмсен мăнастирьне çитсе курнă. Кунта юсав ĕçĕсем пыраççĕ. Вĕсене Чăваш автономине йĕркеленĕренпе 100 çул çитнĕ тĕле вĕçлемелле.

## Чăх ашне халăх кăмăллать

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн председателĕ Юрий Попов тата ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов Шупашкар районĕнчи чăх-чĕп ĕрчетекен хуçалăхсенче пулнă. "Юрма" агрохолдинг Лапсарта юлашки çулсенче тунă объектсемпе паллашнă. Нумаях пулмасть кунта 997 пин вырăнлă 13 чăх-чĕп вити хута кайнă. Çывăх вăхăтра фабрикăра тата 10 çĕнĕ вите туса пĕтермелле. Çакăн хыççăн продукци калăпăшне икĕ хут ӳстерме май килĕ. Хальхи хăватпа кăçал фабрика 18 пин тоннăран кая мар аш туса илме хатĕр. Çакăн çинчен агрохолдинг ертӳçи Владимир Ермолаев пĕлтернĕ.

2013 çул вĕçĕнче фабрикăра чăх-чĕп пусса унăн ашне тирпейлемелли цех уçăлнă. Унта йăлт ют çĕр-шывра туса кăларнă хатĕр-хĕтĕр вырнаçтарнă. Сехетре 6 пин чăх-чĕпе пусса тирпейлеме пулать. Фабрикăран тухакан аш юр-варĕ Чул хула, Чĕмпĕр, Пенза облаçĕсене ăсанать. Ертӳçĕне ĕненес пулсан чăх ашĕ лавккасенче сутăнмасăр выртмасть, халăх ăна ытларах та ытларах туянать.

Агрохолдингăн Шупашкарти площадки те çĕнелет. Кунти объектсен ĕçĕ улшăнать – малашне бройлер чĕпсен ашне хатĕрлеме пуçлаççĕ (хальчен çăмартапа тивĕçтернĕ). Çавăнпа чăх-чĕп витисенче талăкĕпе чарăнми юсав ĕçĕсем пыраççĕ. Çулталăк вĕçленнĕ тĕле çĕнĕ витесен пĕр пайĕ хута каймалла. Çитес çул вара фабрика çултталăкне 50 пин тонна ытла аш кăларма палăртать.

## Тепĕр хут хутшăнма пултараççĕ

Ас тăватăр-и: темиçе çул каялла пысăк парăмлă ял хуçалăх предприятийĕсене пулăшма патшалăх ятарлă программа хатĕрленĕччĕ. Финанс тĕлĕшĕнчи лару-тăрăва çăмăллатма, сывлăш çавăрса яма ĕнтĕ. Программăна республикăри ял хуçалăх предприятийĕсем те хутшăнчĕç. Хальхи вăхăтра унта 78 организаци шутланать (парăмсене тӳлесе татма алă пусса килĕшнĕ йышăн 27,9 проценчĕ). 202 хуçалăхпа (парăмсене реструктуризацилеме алă пуснă йышăн 72,1 проценчĕ) килĕшĕве татнă, çав шутра 29-ăшĕпе (татнă килĕшӳсен 14,4 проценчĕ) – вĕсем парăмсене палăртнă вăхăтран маларахах тӳлесе татнăран.

Программа пурнăçланма тытăннăранпа парăма каярах юлса тӳлесе татма комиссие 290 заявлени тăратнă. 280-шне программăна кĕртнĕ. Вĕсен пĕтĕмĕшле парăмĕ 744,6 млн тенкĕпе танлашнă, çав шутра пенипе штраф сумми – 400,7 млн тенкĕ. Тĕрлĕ саккуна тĕпе хурса пенисемпе штрафсене 317,08 млн тенкĕлĕх шутран кăларнă.

Черетлĕ саккунпа ял хуçалăх предприятийĕсем финанс лару-тăрăвне лайăхлатма программăна тепĕр хут кĕме пултараççĕ. Ку тĕлĕшпе РФ Патшалăх Думи саккуна иккĕмĕш тата виççĕмĕш вулавра йышăннă та ĕнтĕ. Унта хуçалăхсем программăна тепĕр хут хăçан хутшăнма пултарнине тĕплĕ çырса кăтартнă. Тĕслĕхрен, малтанхи килĕшӳсемпе парăма вăхăтра татса пынă пулсан е тыр-пулăн, ытти тухăçăн 25 проценчĕ ытла çут çанталăк инкекĕнче пĕтнĕ май ĕç калăпăшне чакарма тивсен, усал чир сарăласран хӳтĕлесе пысăккăн 15 процентне çухатсан е туртса илсен.

"Йывăрлăха кĕрсе ӳксен хăш-пĕр предприяти программăна тепĕр хут хутшăнма пултарать", – палăртнă РФ Патшалăх Думин комитетĕнче.

## «Уй хулине» çитсе курнă

Пенза облаçĕнчи Дубровки ялĕнче "Сингента" компани çĕр ĕçченĕсене "уй хулипе" паллаштарнă. Çак мероприятие чăвашсем те хутшăннă.

Ăна çӳлерех асăннă компани пĕр çул çеç ирттермест. Хальхинче 20 гектар çинче Раççейĕн вăтам тăрăхĕнче аван пулакан ял хуçалăх культурисен гибричĕсене ӳсен-тăрана хӳтĕлемелли препаратсемпе усă курса çитĕнтернĕ.

Çурхи тулă, урпа, сахăр кăшманĕ, рапс, хĕвел çаврăнăш, куккурус, пăрçа кĕнĕ çак йыша. Ӳсен-тăрана хӳтĕлемелли майсем мĕнле усă панине кашниех куçпа курса ĕненнĕ.

Кăтартнисĕр пуçне хӳшĕне аса илтерекен çуртсенче хăнасем валли "ăстаçă класĕсем" йĕркеленĕ. Тĕрлĕ регион специалисчĕсем ĕçтешĕсемпе ирĕклĕн калаçма, пĕр-пĕрин опычĕпе паллашма пултарнă.

**Ирина ПАВЛОВА.**

## Сывлăх пултăр

Çак кунсенче Çĕрпӳ районĕнчи Анатри Кипекçе ялĕнче çĕнĕ фельдшер-акушер пункчĕ хута кайнă. Ку вăл районти иккĕмĕш ФАП. Пĕрремĕшĕ иртнĕ çул Старак ялĕнче уçăлнă.

ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова уяв ячĕпе саламланă май ял халăхне ФАП питĕ кирлине палăртнă. «Тухтăр пулсан, фельдшер-акушер пункчĕ ĕçлесен ачасене те, ватăсене те меллĕрех. Хĕрарăмсем те ача ытларах çуратĕç. Ялăн пуласлăхĕ те куç умĕнчех», – тенĕ вăл.

Асăннă ФАП вице ял çыннине тивĕçтерĕ. Пĕтĕмĕшле йыш – 366 çын.

Нумаях пулмасть çакнашкал медицина учрежденийĕ Муркаш районĕнчи Шаптакра та уçăлнă. Алена Петрякова акушерка 600 ытла çын сывлăхне тĕрĕслесе тăрĕ. Çак шутра – 120 ача.

ФАП çумĕнчех ача-пăча площадки йĕркеленĕ. Кунашкалли хальччен пулманччĕ-ха.

Иртнĕ çул республикăри ялсенче пурăнакансем валли 20 фельдшер-акушер пункчĕ хута кайнă, кăçал – 5. Тепĕр пиллĕкĕшĕ черетре.

## Тухăç илес тесен

Патăрьел районĕнчи «Труд» хуçалăхра вырма ĕçĕсене хатĕрленес тĕлĕшпе районти канашлу иртнĕ.

Кăçал асăннă районта пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене 18760 гектар çинчен пухса кĕртмелле. Уй-хире пурĕ 82 комбайн (пĕлтĕр – 56) тухĕ. Утă уйăхĕн 5-15-мĕшĕсенче ятарлă комисси вырма техникине тĕрĕслĕ. Çавăн пекех çĕнĕ тухăçчен кĕлетсене те тасатмалла. Хăш-пĕр хуçалăхра ку тĕлĕшпе халĕ хĕрӳ ĕç пырать. Сăмахран, «Труд» колхозра кĕлетсене шуратнă, сортировкăсене юсанă.

Канашлура ĕç хăрушсăрлăхĕ çинчен те калаçнă. Комбайнсем çинче вут-çулăм сӳнтерме ятарлă хатĕр, кĕреçе, витре кирлĕ. Ана хĕррипче хăйăр купи пулмалла. Йĕтем çинче те шыв пичкисем вырнаçтармалла.

Ĕççи вăхăтĕнче кадрсем çитменни ертӳçĕсене самай шухăшлаттарать. Категорисĕр механизаторсене штурвал умне лартма юрамасть. Анчах та тулли пучаха пуçтармасăр хăвараймăн. Çавна май ирĕксĕрех «уй-хир капрапне» ахаль çынна шанса пама тивет.

«Ĕçченсене хавхалантармалла, условисене туса памалла. Вырма вĕçленмесĕр комбайнсене районтан кăларса яма юрамасть», – çирĕппĕн асăрхаттарнă район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçи Мансур Калмыков.

Канашлăва хутшăннисем çĕр улми тата кĕрхи тĕш тырă уйĕсенче пулнă. Çанталăк каçсерен сивĕ тăнăран «иккĕмĕш çăкăра» фитофтора чирĕ ернĕ. Тырă çинче вара пучаха сиенлекен хурт-кăпшанкă ĕрчеме пикеннĕ. Ăна пĕтерме хими препарачĕпе усă курмаллине палăртнă.

Пулăхлă çĕр пысăк тухăç парать. Юлашки вăхăтра хуçалăхсем тислĕкпе сахалрах усă курнине пĕлтернĕ канашлура. Хăшĕ-пĕри вара унччен пекех хастар ĕçлет. Ку тĕлĕшпе «Батыревский», «Звезда», «Красное знамя», «Исток» хуçалăхсем тĕслĕх кăтартаççĕ.

**Ольга ПАВЛОВА.**

**ÇАНТАЛĂК**

| Шупашкарта | Вăхăт | 9.07 | 10.07 |
|---|---|---|---|
| Температура, °С | 2–4 сехетре<br>14–16 сехетре | +16<br>+22 | +12<br>+17 |
| Çумăр çăвать | | – | ☔ |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 747 | 745 |

Инçетри ял сасси

# Вăрман пăхать пахчана



"Пĕр е икĕ ачаллă çемьесем Березовка ялĕнче сайра пулнă. Тĕслĕхрен, Исаевсем саккăрăн ӳснĕ. Вĕсемпе юнашаррисем – çиччĕн, теприсем – пиллĕкĕн. Унтан каллех саккăр, пиллĕк, çиччĕ, пиллĕк..." – пӳрнисене хуçса шутлама тытăнчĕ Канаш районĕнчи çак ялта пурăнакан Валерий Григорьевич Федоров. Иртнине аса илчĕ вăл. Паян кунта хĕлĕнçăвĕн пурăнакансен шучĕ йышлă ачаллă çемьепе кăна танлашать. Тепĕр 5 çултанах, тен, пĕтмĕ, 10-15 çултан малашлăхне этем тăсаймасан вăрман татса парĕ.

Çавăрса илнĕ вăл Березовкăна. Ял çыннисен пахчинченех пăхать, пахчаран темиçе метр ут – йывăçсен ытамне лекетĕн. Илем, ырлăх, çăтмах. Мулкач, пăши, чĕрĕп, çĕлен, ытти чĕр чун ял çыннисене хăнăхнă, лешсем те çаплах. Пĕрпĕрне усал тунине ас тумаççĕ кунта. Шухăшласан – савăнса пурăнмалла, анчах çынна нумай кирлĕ çав. Чи малтанах – ĕç.

Канаш хулисĕр пуçне таврара ĕç тупма йывăр. Юнашарти Ăвăспӳрт Кипечри ял хуçалăх предприятийĕ "сывламанпа" пĕрех. Икĕ ял хушшипе чукун çулĕ иртмен пулсан Канаша çитме те кăткăсчĕ Березовка çыннисене. Ĕçе çӳрекенсем нумайăн мар – 4-5 çемьерен кăна. Пуйăс ку вырăнтан ирхине ултă сехет тĕлнелле иртсе каять. Ĕçе çӳрекенĕн ирхине тăватă сехетрен кая юлмасăр тăмалла. Çăвăнмалла, пуçтарăнмалла, выльăха апатламалла, хĕлле вутă хутса пултармалла. Каçхи пуйăс 18 сехет иртсен çитет. Ĕçре тата çул çинче çур талăк иртет.

Ăвăспӳрт Кипечрен Березовкăна паян асфальт çулпа çитме пулать. Ку тĕлĕшпе ял çыннисен пурнăçĕ çăмăлланнă, маларах вара тертленнĕ. "Арăм юн пусăмĕ хăпарнипе асапланать. Пĕррехинче çур умĕн хытах аптăрарĕ. Васкавлă медицина машини çул çуккипе яла кĕреймест. Çунашкапа туртса тухма тиврĕ", – аса илчĕ Валерий Григорьевич 7-8 çул каяллахи вăхăта.

Асфальт çул пурри яла "чĕртме" пулăшать тееймĕн. Çут çанталăк газне кĕтеççĕ Березовкăсем. Тĕрĕссипе, шанма пăрахнă. Аслă пуçлăхсем патне çырусем те çырнă – усси пулман. Хăй вăхăтĕнче, çине тăрсах газ кĕртнĕ чухне, проекта лекес тĕлĕшпе хăйсен ялĕшĕн чупакан çын пулманнине палăртать ветеран. Çамрăксем ĕçленĕ, вĕсен вăхăт пулман. Ялти хĕрарăмсем ăнлантарнă тăрăх – газ пăрăхĕсене хывма чукун çул иртни чăрмантарать-мĕн. Çавăнпа ял çыннин хĕлле ирĕксĕрех вутă хутса пурăнма тивет. Çулла газ баллонĕпе усă курса апатçимĕç хатĕрлеççĕ. Вăрман ăшне путнă ял çыннисем вутта вăрманта шырамаççĕ, укçалла туянаççĕ. "Вăрман хытнă, унта пит кĕртесшĕн мар", – тет Валерий Григорьевич. Лайăх-и çакă е япăх-и – калама кăткăс, анчах вăрмана кирлĕ пек тасатманнине шута илсе-ши – арçын вăл шăршланса пынине асăнчĕ. Тăрантарма вара чăннипех тăрантарать: çырла, кăмпа пайтах.

Тепĕр чухне вăрман хушшинчи ял шывсăр та нушаланать-мĕн. Тĕлĕнмелле, килти тарасара шыв çук е сахал – тĕп сакайĕ вара типме пĕлмест. Шăрăх килнĕ çул уйрăмах йывăр пулнă ял çыннишĕн. Пурин те тенĕ пекех килти тараса типсе ларнă. Валерий Григорьевич хăйĕн пĕчĕк транспорчĕпе – мотоблокпа – халăх валли юнашарти Ăвăспӳрт Кипечрен çулталăк хушши шыв турттарнă. Хĕл ларсан юр шывне ирĕлтерсе выльăха шăварнă. Унашкал вăхăт урăх пулман, анчах ял администрацийĕ ун пек лару-тăруран хӳтĕленсе темиçе çул каялла урам варринче çăл чавтарнă. Килте тараса çуккисем е вăл типме тытăнсан унта çӳреççĕ.

Вăрмана, çăл патне утнисĕр, пахчана тухнисĕр, пур-çук кӳршĕсем патне каçнисĕр пуçне Березовкăра урăх ниçта та çул тытаймăн. Пĕр социаллă объект та çук. "Пулман та", – тет Валерий Федоров. Вăл ӳснĕ вăхăтра каççерен килте краççын çуннă. 1960 çулсенче кăна яла электричество çитнĕ.

Тавар кирлĕ чухне Березовкăсем усламçăсене телефонпа шăнкăравласа пĕлтереççĕ те лешсем мĕн кирлине илсе килсе параççĕ. Хăйсен тĕллĕн те çӳреççĕ. Пĕр 20 çул каялла райпо килти лавкка йĕркеленĕ, кайран, ахăртнех, тупăш сахаллипе, хупнă.

"Кама кирлĕ эпир?" – терĕ маларах Валерий Григорьевич ялта çут çанталăк газĕ çуккишĕн пăшăрханса. Хăшĕпĕриншĕн, тен, чăннипех те ик айкки те тăвайкки: Березовкăсен нушисĕр те татса памалли ыйту нумай. Анчах пĕчĕк ял çыннисем пĕр-пĕрне кирлĕ, унсăрăн вĕсем пурăнаймаççĕ. Пач пĕччен ĕмĕрлекен ватăна кӳрши пулăшмасан кам пулăштăр? Интернатра ӳснĕ ялти чи çамрăк çынна (вăл халĕ 40 çулта) ĕçлеменнине кура кам алă тăсĕ? Каллех юнашар пурăнакансем пулăшаççĕ. Лешĕ те ватăсем ыйтсан турткаланса тăмасть. Ара, çĕр улми пуссине туртса шырма та çын кирлĕ. Вăй çителĕксĕр. Çамрăк вĕсене пулăшать.

Ялтан кӳршĕри шкула пĕр ача та çӳремест. Унашкалли çук. 2-3 çултан темиçен тупăнĕ. Унччен ашшĕ-амăшĕ ялтан куçса каяс темесен, паллах.

Куçса каякансем пулнă, яла килсе тĕпленекенсем – çук. Пĕрисем нумаях пулмасть ялта çурт шыранă. Сутаканне уншăн 50 пинрен ытла тӳлеме килĕшмен. Кун пек йӳнĕ хакпа камăн сутас килтĕр?

Çут çанталăк газĕ кĕртсен халăх йышĕ хутшăнасса шанать Валерий Григорьевич. Çынсем пулсан йывăç-куракăлă ялта, тен, выльăхĕ те хушăнĕ. Ара паян унта пĕр сăвакан ĕне те çук. Нумаях пулмасть пĕр çемье пăру туяннă, ахăртнех, ĕне тăвас шухăшпа.

Ялăн шăпи çинчен Валерий Федоровпа чылайччен пуплерĕм эпĕ. Мăшăрне вăрмантан кĕтсе илессе ĕмĕтлентĕм. "Йăлтах пурнăçран килет. Хулара вăл лайăхланса пырсан кунта килес текенсене кĕтме хĕн. Унти пурнăç хытсан шанчăк пур", – пĕтĕмлетрĕ вăл шухăшне.

Мана ăсатма урама тухсан мăшăрĕ çавранса çитрĕ. Тăхлачипе утă çулнă-мĕн вĕсем. "Мĕнле пек туйăнать – нушара е ырлăхра пурăнатăр?" – шӳтлесе ыйтрăм çаксенчен. "Çăтмахра", – терĕç вĕсем.

Калаçнă хушăра яла прицеп çаклатнă мотоблок кĕрсе кайрĕ. Тем вăхăтранах каялла çавранса тухрĕ. Паттăр хĕрарăмсем мана Ăвăспӳрт Кипече çурран уттармарĕç, çак техникăпа лартса ячĕç. Ытти-хытти çук пулсан та ялтан асфальт çул тухни аванах çав. Тăнкăртаттарса мар, пĕр тикĕссĕн чупрĕ пĕчĕк трактор. Эпĕ тавралăх илемĕпе киленсе пытăм. Çул хĕрринчи шĕшкĕлĕх питех те майăрлă. Çитес çул тыр-пуллă килессе систерет-ши? Вырăнĕ çăтмах кунта, килĕрех тет, ахăртнех.

**Ирина НИКИТИНА.**

# Вăраха ярас мар

Иртнĕ эрне вĕçĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев район тата хула администрацийĕсене ертсе пыракансемпе видеоконференци майĕпе канашлу ирттернĕ. Социаллă пурнăçпа экономикăшăн пĕлтерĕшлĕ чылай ыйтăва пăхса тухнă унта. Выльăх апачĕ ытлă-çитлĕ хатĕрлесси çинчен те калаçнă.

Республикăн ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов пĕлтернĕ тăрăх – иртнĕ эрне кун тĕлне хуçалăхсенче (çав шутра фермер хуçалăхĕсенче те) нумай çул ӳсекен курăка 78,7 пин гектар çинче çулнă. Планпа палăртнă лаптăкăн 73,8 процентĕ çинче утă хатĕрленĕ. Пĕр çул ӳсекен курăка 285 гектар çинче çулса пуçтарнă.

Ял хуçалăх предприятийĕсемпе фермер хуçалăхĕсенче пĕтĕмпе 49,4 пин тонна утă (планпа пăхнин 63 процентĕ), 108 пин тонна сенаж (70,2 процент), 17,9 пин тонна силос (9,1 процент) хатĕрленĕ. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан утçи кал-калраххăн пынине палăртмалла. Вăрмар, Куславкка, Шупашкар районĕсенче витаминлă курăк çăнăхĕ те авăртаççĕ. Хальлĕхе 222 тонна (пĕлтĕрхи çак тапхăрта 190 тонна) хатĕрлеме ĕлкĕрнĕ.

Апат единиципе хакласан республикăра пĕтĕмпе 58,2 пин тонна (планпа пăхнин 48,4 процентĕ) саппас пур. Майракаллă шултра выльăх пуçне 10,9 центнер апат единици тивет. Ку пĕлтĕрхи кăтартăвăн шайне çитсе пырать.

Ыттисемпе танлаштарсан Шăмăршă тата Улатăр районĕсем япăхрах ĕçлеççĕ. Шăмăршăсем пĕр условнăй выльăх пуçне (сыснасемпе чăх-чĕпе шута илмесĕр) – 6,9, Улатăрсем 7,6 центнер апат единици кăна хатĕрленĕ. Малашне те ĕç каплах кайсан выльăх шутне упраса хăварма йывăр пулĕ. Çулталăк пуçланнăранпа Улатăр, Вăрмар, Çĕмĕрле районĕсенче сĕт сăвăмĕ чакнă. Çакă хуçалăхсенче силос, сенаж пач туманнипе е çителĕксĕр хатĕрленипе çыхăнни куç кĕрет.

Чăваш Ен ертӳçи Михаил Игнатьев çĕр ĕçченĕсене утçие палăртнă вăхăтран кая юлмасăр вĕçлеме чĕнсе каланă. Каю уттине çуласси ытларах чухне вырмана тухмалли вăхăтпа пĕр килет. Унта та, кунта та ĕлкĕрме питех те йывăр, техника çитмест. Çавăнпа ĕçе вăраха тăсмалла мар.

### РЕСПУБЛИКА УЙ-ХИРĔНЧЕ (утă уйăхĕн 7-мĕшĕ тĕлне)

| Районсем | Нумай çул ӳсекен курăксене çулнă | Утă хатĕрленĕ | Сенаж хатĕрленĕ | Силос хатĕрленĕ | Условнăй выльăх пуçне – апат единици |
|---|---|---|---|---|---|
| | гектар | òî í í à | òî í í à | òî í í à | центнер |
| Улатăр | 1096 | 715 | 706 | 0 | 8,1 |
| Элĕк | 3221 | 1903 | 4400 | 400 | 12,7 |
| Патăрьел | 6198 | 2717 | 9757 | 0 | 14,7 |
| Вăрнар | 4605 | 3030 | 11300 | 2700 | 10,6 |
| Йĕпреç | 6880 | 3280 | 3110 | 2100 | 10,9 |
| Канаш | 3900 | 2730 | 4400 | 0 | 9,5 |
| Куславкка | 3000 | 386 | 0 | 0 | 26,5 |
| Комсомольски | 5103 | 4000 | 1050 | 0 | 4,1 |
| Красноармейски | 4704 | 1885 | 5650 | 1900 | 14,9 |
| Хĕрлĕ Чутай | 5016 | 2060 | 5500 | 400 | 12,0 |
| Сĕнтĕрвăрри | 3020 | 820 | 2400 | 4260 | 34,1 |
| Муркаш | 5000 | 5200 | 6000 | 1500 | 11,0 |
| Пăрачкав | 4346 | 5428 | 1523 | 0 | 10,5 |
| Вăрмар | 3231 | 2890 | 800 | 0 | 115,4 |
| Çĕрпӳ | 2750 | 1715 | 3370 | 0 | 11,4 |
| Шупашкар | 3442 | 2241 | 15751 | 0 | 11,8 |
| Шăмăршă | 2700 | 1860 | 2160 | 0 | 11,6 |
| Çĕмĕрле | 1124 | 695 | 910 | 0 | 12,0 |
| Етĕрне | 6211 | 3786 | 8621 | 6233 | 13,4 |
| Елчĕк | 7818 | 4078 | 13359 | 0 | 9,6 |
| Тăвай | 3550 | 2590 | 5440 | 0 | 11,7 |
| Республикипе | 86915 | 54009 | 106207 | 19493 | 11,3 |

# Килĕшӳпе, пилпе

Патăрьел районĕнчи Еншик ялĕнче пурăнакан Николай Федоровичпа Таисия Петровна Урмаковсем пурнăç сукмакĕпе ултă теçеткене яхăн пĕрле утаççĕ. Çитес çул вĕсем кевер туй кĕрлеттерĕç.

Иккĕшĕ те сакăр теçеткерен иртнĕ пулсан та хайсен çулĕсенчен чылай çамрăк курăнаççĕ. Паллах, пĕр-пĕрне хисеплесе, юратса, упраса пурăнни ĕмĕре тăсма пулăшатех. Вĕсем паян та хĕрпе каччă пекех вашават, маттур. Пилĕк ачи те тăван йăваран вĕçсе тухса кайнă. Хăйсен çемйипе пурăнаççĕ. Ашшĕ-амăшĕ патне час-часах кайса çӳреççĕ. Николай Федоровичпа Таисия Петровна вара иккĕшĕ çеç кун кунлаççĕ. Картиш тулли чăх-чĕп, качака, пăру усраççĕ. 3-4 çул каярах ĕне выльăх та тытнă. Ачисен сĕнĕвĕпе çеç усрама пăрахнă. Ватлăхра канлĕх кирлине ăнланаççĕ вĕсем. Аслă Урмаковсем, выльăх-чĕрлĕхпе йăпанса пурăнма хăнăхнăскерсем, вара ĕç йĕркинчен уйрăлаймаççĕ. Ара пахчи те çум курăксăр, типтерлĕ.

Николай Федорович ĕмĕрĕпех «Герой» колхозра трактористра ĕçленĕ. 70 çул тултаричченех вăй хунă. Çак хушăра мĕн чухлĕ çĕр лаптăкĕ сухаламан-ши вăл?! «Хурçă утпа» халĕ те сывпуллашман. Килти пахчине сухаламалла е ăнакăна турттарса килмелле – тӳрех тракторне кĕрлеттерет. Ачисем ăна çăмăл машина туянса панă. Унпа та çӳрет вăл. Сывă пурнăç йĕркине пăхăнса пурăннăран вăй-халĕ тапса тăрать унăн. Николай Урмаков 15 çула яхăн ял старостинче ĕçленĕ. Ял-йышăн чылай ырă ĕç тунă. Сăмахран, хăй шутĕнчен икĕ кӳлĕ чавтарнă. Халĕ вĕсене пулăсем янă. Хур-кăвакал валли те чăмпăлтатмалли вырăн пур. Шăрăх кунсенче ял ачи-пăчи те кӳлĕ хĕрринчен кайма пĕлмест.



Таисия Петровна та кун-çулне колхозра ĕçлесе ирттернĕ. Туслă мăшăр хăйсен ĕмĕрĕнче икĕ çурт лартнă. Халĕ те кĕрĕк арки йăвалама вăхăт çук вĕсен. Кил-çуртне çĕнетнĕ, шыв кĕртнĕ. «Кăмакана пăсса туалет, ванна турăмăр», – тет кил хуçи хĕрарăмĕ. Самана таппинчен юласшăн мар ватăсем.

«Упăшка сывă пулсан пурăнатпăр, – ăшшăн сăмахлать Таисия Петровна. – 59 çул хушшинче ырри те, усалли те пулнă. Пĕр-пĕрне каçарнă, хисепленĕ. Çамрăксен те çак йĕркепе пурăнмалла, çемьене сыхласа хăвармалла. Аслисен пилне манмалла мар».

Пĕр-пĕрне çухатасран шикленеççĕ ватăсем. Мăшăр акăш евĕр туйăнаççĕ вĕсем. Килĕшӳре çуралнă тĕпренчĕкĕсем те телейлĕ. Ашшĕ-амăшне вăй-хăват кӳреççĕ, савăнтараççĕ. Ватлăхра вĕсемшĕн тĕрек шутланаççĕ.

## Телей курма çуралччăр

Утă уйăхĕн 9-15-мĕшĕсенче республикăра «Мана пурнăç парнеле!» информаципе çут ĕç акцийĕ иртет. Ăна Çемьепе юрату тата шанчăклăх кунне халаллант. Акцин тĕллевĕ – çемье ăшшине, йăлине упрасси, аборт çинчен халăха ăнлантарасси, хырăм пăрахассине чакарас тĕлĕшпе сывлăх сыхлав управленийĕ, медицина, общество тата тĕн организацийĕсем пĕрле пухăнса ĕçлесси.

Акци вăхăтĕнче Чăваш Енре информаципе вĕрентӳ мероприятийĕсем йĕркелеççĕ, аборт сиенĕ çинчен халăха ăнлантараççĕ. Тĕп мероприятисенчен пĕри вара – çамрăк амăшĕсемпе тĕл пулни. Вăл Президентăн перинаталь центрĕнче иртет. Унта амăшĕсемпе пепкисем хутшăнаççĕ. Маларах çак хĕрарăмсем хырăм пăрахас тĕлĕшпе тухтăр патне пынă. Тухтăр сĕнĕвĕпе вара ачисен пурнăçне упраса хăварнă. Мероприятие хутшăнакансене вĕсем хăйсем çинчен каласа парĕç.

Тепĕр мероприяти вăл – «Пĕр эрне абортсăр». Çак вăхăтра Президентăн перинаталь центрĕнчи тухтăрсем ку тĕлĕшпе операцисем ирттермеççĕ. Специалистсем медицина ĕçченĕсемпе лекцисем, калаçусем йĕркелеççĕ, çула çитмен çамрăксемпе тата ачасемпе тĕл пулма кану лагерĕсене çул тытаççĕ.

Чи кирли – кашни пепке телейпе çуралтăр. Вăл кун çути курасса çемье чăтăмсăррăн кĕттĕр. Хĕрарăм сывлăхне тата ача пурнăçне упраса хăварассишĕн общество мĕн кирлине пурне те тутăр.

## Иртнĕ кун-çул асăмрах

Раиса Григорьева 1936 çулта Услă Пукашра çуралнă. – Атте фронта тухса кайнă чухне мана çӳлелле çĕклерĕ те: «Райкка, аннӳне ĕнесем пăхма пулăш. Вара выçă вилмĕр эпĕ киличчен», – терĕ. Анчах хăй каялла таврăнаймарĕ, – аса илет иртнĕ кун-çулне Раиса Григорьевна.

Пĕчĕкскер ашшĕ каланине ăша хывнă. Амăшне ферма ĕнисене пăхма пулăшнă, кĕтĕве çӳренĕ.

– Сталин ячĕллĕ хуçалăх ертӳçи пирĕн çемьене çăкăрсăр лартман, – тет 80 çула çывхаракан ĕç ветеранĕ.

Хăй вăхăтĕнче çирĕм ĕнене алă вĕççĕн сунă вăл. «Эльбарусовский» совхоз саланиччченех вăй хунă Райкка аппа. Çĕньялти Лидия Степановăпа пĕрле ĕçленĕ. Ĕçри хастарлăхшăн вун-вун диплома, Хисеп хутне тивĕçнĕ. Вĕсем пĕр арча пухăннă темелле. Мăнукĕсем курса тĕлĕнеççĕ паян.

**Анатолий АНИШОВ.**
**Сĕнтĕрвăрри районĕ.**

### Усăллă канашсем

• Çыннăн кунне 350 миллиграмм тăвар çимелле. Эпир вара 3500 миллиграмм çиетпĕр. Унăн сиенĕ пирки те манмалла мар.

• Газ хушнă шыв шăла пĕтерет. Ăна час-часах ĕçсен сахăр чирĕ, астма аптратать.

• Армути организмран ытлашши тăвара тата сиенлĕ япаласене кăларать. Вар хытниннчен те пулăшать.

• Тирĕк-чашăка горчица çăнăхĕ лайăх тасатать. Çавăн пекех унта апат соди яма юрать. Горчица çăнăхĕ çӳçе ӳсме тата унăн тымарне çирĕплетме пулăшать.

• Шăнăр курăкĕнчен Китайра тĕрлĕ эмел хатĕрлеççĕ. Ăна пухнăшăн пысăк укçа тӳлеççĕ. Шăнăр курăкĕн çулçи пуç ыратнăран, сахăр, куç тата чĕре чирĕсенчен пулăшать.

• Хĕвелпе пиçĕхнĕ ӳт-пĕве çĕр улмипе сиплеме май пур. Ăна шуратса пĕçермелле, тӳмелле, хăйма хушса пăтратмалла. Ӳт çине 10-15 минутлăха хумалла. Кайран шăлса тасатмалла.

# Ырă сăмах ывăнтармасть

Етĕрне районĕнчи Мăн Явăшри вулавăш вăтам шкулăн аялти хутĕнче вырнаçнă. Виçĕ чӳречеллĕ пӳлĕм çутă та таса. Чӳрече саккисем çинче – чечек куршакĕсем, стена çинче – стендсем, кĕтесре – телевизор. Пĕтĕмлетсе каласан, пур япала та хăй вырăнне тупнă.

– Кĕнеке фончĕ – 8 пин. Вулакан шучĕ – 700 çын. Çак хисепрен çуррине яхăнăшĕ библиотекăна час-часах кĕрсе тухать, – паллаштарать ĕçĕ-хĕлĕпе Лидия Скворцова. – Сăмах май, Анна Дмитриева, Галина Фомина, Ольга Якимова сакăр теçеткене çывхараççĕ пулин те алăран кĕнеке ямаççĕ. Çамрăксем питех вуласшăн мар. Çапах та вĕсене мероприятисем ирттерме явăçтаратпăр. Вулакансен конференцине те хастар хутшăнаççĕ вĕсем, юрă-ташăпа сцена çине те тухатпăр. Районти смотр-конкурссенчен те юлмастпăр. Пире хавхалантаракан – Хупахушкăнь клуб ертӳçи Михаил Михайлов купăççă.

Лидия Николаевна вунă ачаллă çемьере çуралса ӳснĕ. Малтанах вăл повар пулма ĕмĕтленнĕ. Çавна май Шупашкарти кулинари училищи хыççăн студентсемпе Астрахань облаçĕнчи пĕр совхоза ĕçлеме кайнă. Уйра вăй хуракан çамрăксене тутлă апат пĕçерсе çитернĕ. Каярахпа вара Шупашкарта ĕçе вырнаçнă.

Лидăна Хучаш вăтам шкулĕнче пĕрле вĕреннĕ Леонид Скворцов килĕштернĕ. Кĕр енне вĕсем туй туса пĕрлешнĕ. – Вăхăт сисĕнмесĕр иртет. Леонид Михайловичпа пĕрлешнĕренпе 27 çул çитрĕ, – кăмăллăн калаçать хĕрарăм. – Çак тапхăрта çĕнĕ çурта пурăнма куçрăмăр, икĕ ывăл çуратса ӳстертĕмĕр. Иккĕшĕ те тивĕçлĕ пĕлӳ илчĕç, хулара тĕпленчĕç.

Вулавăша вырнаçиччен маларах тĕрлĕ ĕçре вăй хунă вăл. Ырă кăмăллă, ăшă чунлă хĕрарăма пур çĕрте те хисепленĕ. Ку ĕçре те кăмăллаççĕ ăна. Ырă çыншăн яланах çул уçă.

**Геннадий САВЕЛЬЕВ.**

# Анна аппа – 100 çулта

Елчĕк районĕнчи Тӳскел ялĕнче пурăнакан Анна Паймина çак кунсенче 100 çул тултарнă. Ăна сумлă юбилейпе саламлама ял-йыш, тус-тăванĕ чылай пуçтарăннă. Анна Архиповнăна РФ Президенчĕ Владимир Путин янă саламлă çырупа паллаштарнă.

Пĕр ĕмĕр хушшинче хура-шура чылай тӳснĕ хĕрарăм. Çапах та йывăрлăха çĕнтерме пултарнă. Паянхи кунччен ăс-тăнпа пурăнать, ял-йыша паллать, ачисемпе савăнать.

Вăл асăннă районти Аслă Таяпа ялĕнче çуралнă, тăлăх çитĕннĕ. Мăшăрĕн Андрей Филипповичăн шăпи те çавнашкалах пулнă. Икĕ тăлăх турата пулăшакан та пулман-тăр. Çамрăксем ытларах хăйсен вăйне шаннă, ура çине çирĕппĕн тăнă. Тăватă ывăлпа икĕ хĕр çитĕнтернĕ вĕсем. Пурне те тивĕçлĕ пĕлӳ илме пулăшнă. Анна Архиповнăн паян – 10 мăнук, вĕсен 16 ачи, кĕçĕн мăнукĕсен 2 ачи.

Вăл ĕмĕрĕпех «Трактор» колхозра вăй хунă. Ăста хушнă – унта кайнă, тĕрлĕ ĕç пурнăçланă. Чылай çул колхоз пахчинче тăрăшнă. Ачаллах вăр-вар пулнăран тĕпренчĕкĕсене те пĕчĕкренех ĕçе явăçтарнă.

Халĕ кинемей пĕччен пурăнать. Хĕрлĕ Çырти аслă хĕрĕ Аида кашни кунах ун патне çӳрет (ялсен хушши 10-12 çухрăм): апат пĕçерет, кил-çуртне тасатать, япала çăвать. Хăй те çамрăк мар, кăçал 75 çул тултарнă. Аппа пулин те унта та, кунта та ĕлкĕрет. Сăмах май, Аида Андреевна ĕмĕрĕпех Хĕрлĕ Çыр шкулĕнче ачасене физика вĕрентнĕ, шкул директорĕн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен çумĕ пулнă.

«Тавтапуç патшалăха пире, ватăсене, пенси укçипе тивĕçтернĕшĕн», – тет 100 çулти кинемей паянхи пурнăçа хакласа.




Сумлă юбиляра саламлама вырăнти «Шуçăм» фольклор ушкăнĕ те хутшăннă, уява пухăннисене авалхи юрă-кĕвĕпе савăнтарнă.

Хăнасем Анна Архиповнăна çирĕп сывлăх суннă май 101 çулхи менелнике те килме шантарнă.

**Страницăна Валентина Петрова хатĕрленĕ.**

# Туслăх аллейи

«Раççей аллейи» – патриот акцийĕ. 2014 çулхи çулла Раççей Федерацийĕн 85 субъектĕнче общество сасăлавĕ тăрăх çак регионсенче тĕрлĕ ӳсен-тăран (симĕс символсем) суйлĕç. Малашне вĕсене экологипе çут ĕç проекчĕсенче, çавăн пекех садпа парк тӳремĕсенче усă курĕç.

Проект тĕллевĕ – çĕр-шыв пĕрлĕхне кăтартни, тĕрлĕ регионта пурăнакансен туслăхне палăртни, экологи культурипе паллаштарни, çут çанталăка упрама вĕрентни.

«Раççей аллейин» пĕрремĕш тапхăрĕ Крымра иртнĕ. Кăçалхи çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче Севастополь хулинчи Çĕнтерӳ паркĕнче акци уçăлнă ятпа уяв йĕркеленĕ. Малашне 3 га лаптăк çинче çĕр-шыври пур регионти 85 тĕрлĕ ӳсен-тăран çитĕнĕ. Паллах вĕсене сасăлавпа суйламалла. Акцин иккĕмĕш тапхăрĕ утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çурла уйăхĕн 31-мĕшĕччен тăсăлать. Çак вăхăтра регионсенче палăртнă ӳсен-тăранран пĕрне суйлама тивĕ. Чăваш Ен списока 5 йывăç-тĕм, курăк тăратнă: хăмла, юман, йăмра, çăка, салтак тӳми (ромашка). Сăмахран, юман 20-40 метр çӳллĕш ӳсме, 2000 çул таран пурăнма (вĕсен ĕмĕрĕ ытларах 300-400 çул) пултарать. Хăмла – явăнса ӳсекен курăк шутне кĕрет. Унăн туни сехет йĕппи май явăнать. Çăка çĕр çинче 40 тĕрли тĕл пулать. Раççей территорийĕнче – иккĕ çеç. Салтак тӳми – нумай çул ӳсекен ӳсен-тăран. Ытларах уй-хирте, çаран çинче çитĕнет.

Республикăра пурăнакансем хăйсен шухăш-кăмăлне «Раççей аллейи» акцин официаллă сайтĕнче палăртма пултараççĕ.

Акцин юлашки тапхăрĕ Вăрман ĕçченĕсен кунĕнче, авăн уйăхĕн 21-мĕшĕнче, иртĕ. Çак кун регионсенчи делегацисем туслăх аллейине 85 ӳсен-тăран лартĕç. Раççей аллейи Крымра ешерĕ.

Çак мероприятие Культура çулталăкне халалласа ирттереççĕ.


Хăмла


Юман


Йăмра


Çăка


Салтак тӳми

# Усăллă хурт-хăмăр

Çĕр çинче пурăнакан миллиона яхăн хурт-кăпшанкăран çыншăн чи усăлли – пыл хурчĕ. Вăл этеме тĕлĕнмелле чаплă, тĕрлĕ чир-чĕртен сыватакан, тутлă пыл парать.

Çĕр çинчи пур халăх та пылăн сиплĕ паллисене ĕлĕкренех пĕлет. Унпа медицинăра анлă усă кураççĕ. Пĕр кашăк пыл – пĕр тумлам сывлăх. Вăл ватти-вĕттишĕн тутлă эмел шутланать, вăй кĕртет, организма чир-чĕртен хӳтĕленме пулăшать. Яппун халăхĕ калашне пыл вăл – çут çанталăк çимĕçĕсен патши.

Вĕлле хурчĕсем ăвăс та тăваççĕ. Пыл шĕвĕ ылтăн пулсан, ăвăс – ылтăн чăмакки. Ахальтен мар унпа ют патшалăхсемпе сутуилӳ тунă чухне укçа вырăнне усă курнă.

Ăвăспа радиоэлектроникăра, металлурги, тир-сăран, пир-авăр промышленноçĕнче, уçлăхра, хут тунă çĕрте усă кураççĕ.

Вĕлле хурчĕ пухакан чечек тусанĕ, хурт амин сĕчĕ, пыл хурчĕн çилĕмĕ (прополис) питĕ усăллă. Прополис сиенлĕ хăш-пĕр микроба пĕтерме пултарать. Унпа медицинăра анлă усă кураççĕ.

Чечек тусанĕ вара пыл пекех, хуртсемшĕн тутлăхлă апат шутланать. Пылпа пуянлатнă чечек тусанне юн сахаллипе аптранă чухне, çын вăйсăрлансан çиме сĕнеççĕ.

Ял хуçалăх культурисене шăркалантарас, çут çанталăка сыхлас енĕпе пыл хурчĕсен пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк.

### Çемьепе пурăнаççĕ

Кирек мĕнле çемьери пекех вĕлле хурчĕсен те ашшĕ-амăшĕ тата ачисем пур. Кашни çемье уйрăм пурăнать.

Вĕсен пысăк çемйинче 70-80 пин хурт. Кашнийĕн хăйĕн тивĕçĕ, ĕçĕ. Вĕллене уçса пăхăр-ха. Унта чарăнми ĕçлекен хуртсене куратăр.

Вĕлле хурчĕсем пĕр-пĕрне апат парасси анлă сарăлнă. Çамрăксем ватăсене апатпа пĕрле гормонсем параççĕ. Çавăнпа вĕсен вăйĕ кирлĕ шайра тытăнса тăрать. Ĕç хурчĕсем икĕ ушкăна пайланаççĕ: пĕрисем вĕллере вăй хураççĕ, теприсем апат пухаççĕ. Çамрăксем йăвари ĕçсене пурнăçлаççĕ, ватăм тата аслăрах ӳсĕмрисем, тавралăха лайăх пĕлнĕрен, нектарпа пыл пухма, шыв илме вĕçеççĕ. 3-4 кунри хуртсем те хăйсем çитĕннĕ вырăна тасатаççĕ.

### Шыв ĕçеççĕ

Хĕвел питтинче пусă, çăл куç патĕнче е юхан шыв хĕрринче вĕлле хурчĕ шыв ĕçнине курнах ĕнтĕ эсир. Вăл шыв ĕçнисĕр пуçне нектар пухнă пек пĕсехине шыв тултарать те вĕллине вĕçсе каять. Вăл ăна личинкăсене çитермелли «пăтă» хатĕрлеме кирлĕ иккен. Унта пыл, вĕлле хурчĕн сĕчĕ тата чечек тусанĕ кĕрет. Организмра «пăтă» часрах ирĕлтĕр тесен ăна кăштах шыв ярса шĕветмелле. Йăвара личинка нумай пулсан çемье шыв йăтма хурт ытларах уйăрать. Çуллахи типĕ, шăрăх çанталăкра йăвари температурăна чакарма, кирлĕ чухлĕ нӳрĕк тытма хуртсем шыва карас çине сирпĕтеççĕ. Кун каçипе пĕр çемье йăвана çур литр таран шыв илсе çитерет. Çавăнпа утарта шыв тултарнă савăт пулмаллах.

### СĂНАВСЕМ

• Чĕкеç çур пуçлать, шăпчăк çăва вĕçлет. • Çумăр умĕн шапасем çыран хĕрне тухса лараççĕ. • Уяр çанталăк умĕн вăрăм тунасем туй тăваççĕ. • Тӳпере тăрисем ирех юрлани – лайăх çанталăка. • Çĕр çырли хĕрелсен тыр-пул акни усăсăр. • Çумăр умĕн вăрман çилсĕрех шавлать. • Ир еннелле сывлăм ӳкмен тĕк кăнтăрла, каç еннелле, çумăр пулмалла. • Вăйлă аслатиллĕ çумăр умĕн çанталăк пăчă, ăршаллă пулать.

## Вилмеллех сăхнă

Вĕлле хурчĕ сăхнипе çын вилнĕ тĕслĕхсем тĕл пулаççĕ. Анчах кунашкалли хальччен пулманччĕ-ха.

Çĕрпӳ районĕнче пурăнакан пĕр арçын ĕçлесе ывăннă хыççăн куркапа квас ĕçнĕ. Çăварĕнче темĕн пĕçертнине тӳрех туйнă хайхискер, сурса пăрахнă. Кваса вĕлле хурчĕ лекнĕ иккен.

Сасартăк арçын хăрăлтатма пуçланă, сывлайми пулнă. Ăна çийĕнчех больницăна илсе кайма шухăшланă. Шел, арçын çул çинчех вилнĕ.

# Хир сысни те, пăши те

Чăваш Енре тискер чĕр чун машина айне лекнĕ тĕслĕх нумайланнă. Шупашкар районĕнче авă хир сыснине çапса кайнă. Улатăр районĕнче пăши транспорт кустăрми айне лекнĕ, Муркаш районĕнче вара – харăсах иккĕ.

Пĕтĕмпе çĕртме уйăхĕн 10-мĕшĕ тĕлне çул çинчи пăтăрмаха пула 7 чĕр чун вилнĕ. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан виçĕ тĕслĕх ытларах. Мĕнле сăлтавпа çыхăннă çакă? Çамрăкраххисем пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçаççĕ. Унсăр пуçне шăрăх çанталăк та витĕм кӳретех. Шăна-пăванран тарса вĕсем уçă вырăна тухаççĕ.

# Техника туянма – 15 млн тенкĕ

Вăрман хуçалăхне аталантарас тата упрас тĕлĕшпе çĕр-шывра ятарлă программа ĕçлет. Çак тĕллеве пурнăçлама 2014 тата 2015 çулсенче 3136,4 пиншер тенкĕ субсиди уйăрĕç, 2016 çулта вара – 8925,1 пин тенкĕ. Патшалăх пулăшăвĕпе 2014-2016 çулсенче вăрманти пушар техникин паркне çĕнетме палăртнă. Техника никĕсне çĕнетни ĕç пахалăхне, хăвăртлăхне ӳстерĕ.

Аса илтеретпĕр: юлашки виçĕ çулта пушар техникин никĕсне çирĕплетес тĕлĕшпе чылай ĕç тунă. Республикăна хальхи йышши 61 техника килнĕ. Тĕллеве пурнăçлама 100 млн тенкĕ расхутланă, çак шутран 75 млн тенкĕ – республика бюджетĕнчен.

Вăрманти пушар службин уйрăмĕсенче 56 пушар машини хатĕр тăрать (кунтах ГАЗ, ЗИЛ, Урал автоцистернăсем, çавăн пекех шыв юхтармалли, сирпĕтмелли ЗИЛ-131 станцисем), 21 патруль комплексĕ, урапаллă 20 трактор, 1 бульдозер, гусеницăллă 4 трактор, 2 мотовездеход.



# Тытнă пулла çиеймен

Шупашкар район сучĕ Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан 36 çулти Сергей Степановпа 30 çулти Василий Малов тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе тишкерсе приговор йышăннă. Вĕсем саккунсăр майпа Атăлта пулă тытнă.

Калаçса татăлнă хыççăн хайхискерсем ака уйăхĕнче «Казанка» кимĕпе пулă тытма кайнă. Хăйсемпе пĕрле виçĕ сĕреке илнĕ.

Сĕрекесене самай пулă пуçтарăннă: 173 хĕрлĕ куç (плотва), 21 çупах, 9 хĕрлĕ çунат (красноперка), 8 карас, уланкă тата çăрттан. Пĕтĕмĕшле тупра 4 пин тенкĕ ытла. Браконьерсене полици ĕçченĕсем тытса чарнă. Степановпа Малов судра хăйсен айăпне пĕтĕмпех йышăннă. Вĕсене 100 пин тенкĕлĕх штрафланă.

Шупашкар районĕнчи Эдуард Васильев та çак тĕлĕшпех суд тенкелĕ çине ларнă. Вăл сĕрекепе Çавал юхан шывĕнче 48 карас тата ăптă (язь) тытнă. Пĕтĕмĕшле 841 тенкĕлĕх сăтăр кӳнĕ.

Суд ăна айăпласа обязательнăй йĕркепе 200 сехет ĕçлеттерме йышăннă. Патшалăха тăкак кӳнĕ хака браконьерсем пĕтĕмĕшле тавăрса панă.

# Тавралăха вараланăшăн

Вăрнар район прокуратури тăван тавралăха упрас тĕлĕшпе тĕрĕслев ирттернĕ. Çавна май Вăрнар ял хуçалăх техникумĕн общежитийĕ çывăхĕнче çӳп-çап, каяш вырăнĕ асăрханă. Пирогов урамĕнчи 4-мĕш çурт таврашĕнче йăлари хытă каяша пухмалли хатĕр вырнаçтарманран купа самаях ӳснĕ. «Интех» пĕрлешӳ ертӳçине йăнăша тӳрлетмелли çинчен асăрхаттарнă.

Вăрнар ял хуçалăх техникумĕн директорĕн администрацине хуçалăх енĕпе ĕçлекен çумĕ тĕлĕшпе административлă йĕркене пăснăшăн ĕç пуçарнă.

**Кăларăма Валентина ПЕТРОВА хатĕрленĕ.**

# Çирĕклĕ Шăхаль



Çирĕклĕ Шăхаль Елчĕк районне кĕрет. Вăл çак ял тăрăхĕн центрĕ шутланать. Кунтан Шупашкара çитме 155 çухрăм, район центрне – 20. Ял вун улттăмĕш ĕмĕр вĕçĕнче йĕркеленнĕ. Хальхи Вăрмар районĕнчи Шăхальсем тата Тăвай районĕнчи Турикас Тушкилсем куçса килнипе пуçланса кайнă. Кунта пурăнакан чăвашсем çĕр ĕçĕпе пурăннă, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетнĕ, тимĕр шăратнă, атă-пушмак çĕленĕ, мунчаларан япаласем хатĕрленĕ. 1920 çулсенче пĕрремĕш пусăмлă шкул пулнă. 1931 çулта "Красный часовой" колхоз йĕркеленнĕ.

17 ĕмĕртен пуçласа 1920 çулччен ял Свияжск, Теччĕ уесĕсенчи вулăссене кĕнĕ, 1920-21 çулсенче Теччĕ кантонĕнче шутланнă. 1921-27 çулсенче Патăрьел уесĕн, 1935 çулччен Кĕçĕн Елчĕк районĕн шутĕнче пулнă. 1935-1962 çулсенче Елчĕк районĕн пулса тăнă. Ун хыççăн ĕмĕрĕ виçĕ çул Патăрьел районĕнче иртнĕ. 1965 çултан каллех Елчĕк районне куçнă.

1645-46 çулсенче ялта 37 кил пулнă, 136 арçын пурăннă. 1721 çулта 105 арçын шутланнă. 1795 çулта 30 килте 116 арçынпа 137 хĕрарăм кун кунланă. 1858 çулта 32 килти йыш 230 çынна çитнĕ. 1897 çулта пурăнакансен йышĕ 488 çын чухлĕ ӳснĕ. 1926 çулта 108 кил 280 арçынпа 292 хĕрарăма пĕрлештернĕ. 1939 çулта 156 кил хуçалăхне 310 арçынпа 360 хĕрарăм тытса тăнă. 1979 çулта арçынсен шучĕ 348, хĕрарăмсен 418 пулнă. 2002 çулта 175 килте 507 çын пурăннă: 242 арçынпа 265 хĕрарăм.

Ялта шкул, ача сачĕ, çемье врачĕн офисĕ, клуб, библиотека, спорт залĕсем, стадион, почта çыхăнăвĕн, Перекет банкĕн уйрăмĕсем пур. Асфальт çул пĕрлештерет.



Наташа Архипова, Надежда Петрова, Антонина Ефимова кӳршĕсем



Культура çурчĕн ертӳçи Ольга Муравьева, Людмила Егорова методист , Ольгăпа Сергей Красновсем (культура ĕçченĕсем) хĕрĕпе Аньăпа, ывăлĕпе Сашăпа.



Альбина Васильевăпа (сылтăмри) ватăсем кăмăллă



Николай Байдуганов – участокри инспектор



Иван Печковпа Мария Николаева пенсионерсем



Юрий Архипов вĕренекен велосипедпа туслă



Улма-çырлапа пахча çимĕç ăсти Евгения Архипова

Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕсем.

## АХ, АНЧАХ...

### Наркотик хатĕрĕшĕн

Çĕмĕрле районĕн сучĕ Пăрачкаври ача çуртĕнче çитĕннĕ 17 çулти пĕр çамрăк тĕлĕшпе приговор йышăннă. Уголовлă ĕçе вара Пăрачкав районĕн прокуратури тĕрĕслевĕпе пуçарнă.

Каччă асăннă ача çуртĕнчи çула çитмен çамрăксене наркотик (0,764 грамм) сутнă. Çакă пысăк виçе шутланать.

Судра йĕкĕт хăйĕн айăпне йышăннă. Ăна 5 çуллăха колоние яма палăртнă.

Çамрăксене куçран вĕçертнĕшĕн должноçри пилĕк çынна çирĕп йĕркепе явап тыттарнă. Çав шутрах ача çурчĕн директорне те. Воспитани енĕпе ĕçлекен директор çумне должноç тĕлĕшпе пĕчĕклетнĕ.

### Шалу тӳлес килмен

Елчĕк районĕнчи 1-мĕш суд участокĕн миравай судйи кăçалхи ака уйăхĕн 24-мĕшĕнче «Аранчеево» Агрофирма» пĕрлешĕвĕн ертӳçи Валерий Смирнов тĕлĕшпе приговор йышăннă. 35 çулти ертӳçĕ ĕç саккунне пăсса виçĕ уйăх ытла ĕçчене шалу тӳлемен (11 пин тенкĕ ытла). Çавна май директора 100 пин тенкĕлĕх штрафлама палăртнă. Анчах суд приговорĕпе килĕшмесĕр айăпланаканăн адвокачĕ аппеляци çăхавĕ тăратнă. Елчĕк районĕн сучĕ вара приговора улăштарман.

### Ĕçлемесĕр пуясшăн

Шупашкарта пурăнакан Алексей Борзов (22 çулта), Борис Васкейкин (20 çулта), Никита Храмовпа (20 çулта) Денис Кудрявцев (19 çулта) суд тенкелĕ çине ларнă. Вĕсем 2012 çулхи раштав уйăхĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа 2013 çулхи нарăс уйăхĕн 9-мĕшĕччен «ПФК» пĕрлешĕвĕн складĕнчен 1 млн тенкĕ ытла сĕтел-пукан хатĕрĕ вăрланă. Ĕçлемесĕрех пуйма шухăшланă курăнать. Çакнашкал лайăх пурнăç малалла та тăсăлма пултарнă, анчах вăрăсене тытса чарнă, ирĕкрен хăтарнă. Суд Борзова – 3 çула, Васкейкина – 2 çул та 6 уйăха, Храмова – 2 çула, Кудрявцева 1 çул та 6 уйăха пĕтĕмĕшле режимлă колоние ăсатма йышăннă.

### Янтти пыра ларать

Халь укçасăр пĕр утăм та тăваймăн. Тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе илни çинчен сăмах пымасть-ха. Кукăр алăллисем хунаса кайрĕç-çке. Çакă хăш-пĕр тĕслĕхсенчен аван курăнать.

Шупашкар район сучĕ "Каледань" юлташлăх ертӳçин Григорьевăн тата "НиКо" фирма пуçлăхĕн Никитинăн ĕçне пăхса тухнă. Ултав çулĕ çине тăнăшăн айăплаççĕ вĕсене.

Хăйсене ыттисенчен ăслăрах та тавçăруллăрах тесе шухăшланă-ши? Ара, эпир айван-çке, теме те ĕненетпĕр. "Алькешре йӳнĕпе хваттер туянса паратпăр, укçине маларах хывмалла", – çапларах юптарнă коммерсантсем пĕр хĕрарăма. Çӳл тӳпене вĕçсе каясла хĕпĕртенĕскер туххăмрах 1,2 млн кăларса тыттарнă.

Вăхăт иртет, анчах хваттер çук, укçи те пăсланнă. Шар курнă хĕрарăм йĕрке хуралçисем патне чупса кайнă. Ĕç-пуç суда çитсен Никитин укçана тавăрса панă. Григорьевăн çылăхĕсем татах пур-мĕн. Кӳкеç тăрăхĕнчи çĕр лаптăкĕсене сутма ӳкĕте кĕртсе вăл 13 çынна ухмаха тăратса хăварнă. Ытларахăшĕ ватă çын. Кусем ăна-кăна тĕшмĕртмеççĕ тенĕ ĕнтĕ. Çав лаптăксене (кашнин хакĕ 300-600 пин тенкĕ таран) хăй çине çыртарнă, кайран хаклăрах хакпа ярăнтарнă. Кунсăр пуçне Григорьев Норильск çыннине 285 пин тенкĕлĕх улталанă иккен. Çичĕ çуллăха кирпĕч шутлама ăсатрĕç ăна.

# Тырă сутăнать-и?



Раççей тĕш тыррине нумай туянакан патшалăхсенчен чи малтанах Турципе Египета асăнаççĕ. Импорт шайне вĕсем юлашки икĕ çулта чылай ÿстернĕ. Çакăн çинчен Пĕтĕм тĕнчери "Тырă рынокĕ – ĕнер, паян, ыран" конференцире Раççей Федерацийĕн "Про Зерно" компанийĕн тĕп директорĕ Владимир Петриченко пĕлтернĕ.

2013 çулхи утă уйăхĕнчен пуçласа Турцие 3,7 млн тонна тырă ăсатнă, Египета – 3,3 млн тонна. Унччен кăтартусемпе танлаштарсан ку 1,5 хут пысăкрах.

Апат-çимĕç рынокĕнче пирĕнпе çыхăну йĕркеленĕ, вĕсене анлăлатса пыракан çĕр-шыв сахал мар. Вĕсенчен пĕри – Саудов Аравийĕ. Унти экспорт шайĕ 1,4 млн тоннăпа танлашнă. Çапла вара арабсем Ирана хыçа хăварнă.

Петриченко палăртнă тăрăх – Иран пирки тĕнче пĕрлĕхĕ санкцисем йышăннă пулин те унти компанисемпе ĕçлеме кăмăллă. Нумай çуллăх килĕшÿсем туни суту-илĕве вăйлатма май парасса шанаççĕ.

Экспорт географийĕ анлă: Йемен (928 пин тонна), Кăнтăр Корея (868 пин тонна), ЮАР (697 пин тонна). Кунсăр пуçне Раççей продукцийĕпе Нигери, Кени, Иордани, Судан кăсăкланаççĕ. Асăннă çĕр-шывсене пурĕ 1,5 млн тонна тырă тиесе янă.

Юлашки тапхăрта хамăр таварпа Ирака та çул хыватпăр тенĕ Петриченко. Халĕ ĕнтĕ 150 пин тонна туянас ыйтăва татса панă. Çакă – пуçламăш утăм.

Кăçал Раççей чикĕ леш енне 26 млн тонна тĕш тырă ăсатасшăн.

## Сĕт-турăх, какай – ютран

Беларуç ертÿçи Александр Лукашенко утçине çÿллĕ шайра ирттерме чĕнсе каланă. Ял хуçалăхĕнчи ĕçсене хăй тĕрĕслесе тăрать те ыттисенчен çирĕп ыйтать. Утă çителĕклĕ хатĕрлесен выльăх-чĕрлĕх отраслĕ пирки пăшăрханмаллиех çук пек.

Вĕсен çитĕнĕвĕсем пурне те тĕлĕнтереççĕ. Ÿсĕм çăл куçĕ – производствăн кашни сыпăкĕнче йĕрке туса хунинче.

Пирĕн сĕт рынокне хăюллăн пырса кĕнĕскерсем хăйсен кăтартăвĕсене лайăхлатсах пыраççĕ. Паян Таможня пĕрлĕхĕнчи патшалăхсенчи рынока Беларуç сĕт продукчĕсен 95 процентне, какайăн 98 процентне парса тăрать. Кун пирки ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç министрĕ Леонид Зайцев каласа панă. Тĕп потребительсем – Раççейпе Казахстан. Экспертсем шутланă тăрăх – хамăрăн отрасль сывлама пăрахсан çитес çулсенче пирĕн сĕтел çинче ютран кÿнĕ сĕт-турăх кăна пулĕ.

## Типĕ çанталăка пула

Колумби ял хуçалăхĕ пысăк çухату тÿснĕ. Ваттисем кунашкал шăрăха ас тумаççĕ. Тăватă уйăх пĕр тумлам çумăр ÿкмен. Шыв çуккипе килти выльăх-чĕрлĕх кăна мар, тискер чĕр чун та аптрать. Вăрман лаптăкĕсене пĕр шелсĕр касса пĕтернипе çав çăтмах вырăнсем часах пуш хир пулса юлĕç.

Этем айăпĕпе çут çанталăк суранĕ нихăçан та тÿрленеймĕ. Акă Бойаке регионĕнче илемлĕ вырăнсем урлă чукун çул хывма тытăннă, çавăнтах пурăнмалли çурт-йĕр хăпартаççĕ. Ку тăрăхра 2013 çултанпах сывлăш температури 40-45 градусран чакмасть. Вăрман хÿтлĕхĕ çуккипе ялсенчи çăлсем типсе ларнă, юхан шывсем ăшăхнă.

Фермер хуçалăхĕсем пысăк тăкак тÿсни каламасăрах паллă. Вĕсен кĕтĕвĕсем кунсерен çĕр-çĕр пуç çухатаççĕ. Выльăх масарĕсем тулса ларнă. Тĕрĕссипе унта та кунта йăваланакан вилесене пуçтарса тирпейлеме те ĕлкĕреймеççĕ.

Лару-тăру кăткăсланса пынипе Колумбин хăш-пĕр районĕсенче чрезвычайлă режим мелĕсемпе усă курасшăн.

ШУХĂШ

## Юлашки кĕпене хывса илме хатĕр

Фермерсен ĕçне тишкерсен вĕсене виçĕ ушкăна уйăрма пулать. Пĕрисем халăха виç пус тÿлесе ĕçлеттерессшĕн.Теприсем тĕрлĕ çапкаланчăка чура туса хунă. Виççĕмĕшĕсем тÿрĕ кăмăлпах ĕçлесшĕн, анчах аграри тытăмĕнчи чăрмавсене хăйсем тĕллĕн çĕнтереймĕç.

Кулленхи пурнăçра пулса иртекен япаласенчен пуçлăпăр калаçăва. Кăçалхи çу уйăхĕнче Курган облаçĕн сучĕ Комаров ертсе пынă коллективлă фермер хуçалăхĕн ĕçне пăхса тухнă. Çакскер ял хуçалăх ĕçне 50 яхăн çынна явăçтарнă. Чылайăшĕн документне туртса илнĕ, хăшĕ-пĕрин паспорт та пулман. Хирте е фермăра пĕр канусăр ĕçлесе пăхăр-ха. Канма ларсанах патак çитереççĕ, тарма хăтланнисене хытă хĕнеççĕ. Кунашкал тамăкра кирек кам та ухмаха тухĕ.

Çак тĕслĕхе мĕншĕн илсе кăтартрăмăр-ха? Йĕркеллĕ ĕçлесе пурăнма майсем çук чухне кашниех тупăша ÿстермелли çул-йĕр шырать. Тепĕр чухне тискер меслетсемпе те усă кураççĕ. Ял хуçалăхĕнчи пĕтĕмĕшле лару-тăру вара чаплах мар. Фермерсене хумхантаракан тĕп ыйту вăл – тырă ÿстерекенсен, ăна тирпейлекенсен тата сутакансен хутшăнăвĕсенче йĕрке çукки. Пĕр тĕслĕх. 2014 çул пуçламăшĕнче пĕр тонна тулă хакĕ 6,5 пин тенкĕпе танлашрĕ, çулталăк каялла вăл 3,5 пин тенкĕ хаклăрахчĕ. Чĕртавар хакĕ чакнă саманара çăкăр-батон хакĕ хăпарса пынине мĕнле ăнланмалла? Эппин хресчене тивĕçмелли укçана ыттисем хăйсен кĕсйине пĕтĕрсе чикеççĕ. Асăннă тытăмра халĕ те йĕрке туса çитерменни тĕлĕнтерет.

Аграрисем темиçе сĕнÿ тăратнăччĕ. Калăпăр, тырă туса илекенсем тупăшăн 80 проценчĕпе хуçаланма тивĕç, ыттисем 20 процентне виçеллĕ пайлаччăр. Сĕтпе какай енĕпе çакнашкал шайлашу: 60 проценчĕ – хуçалăхсене, 30 проценчĕ – продукци тирпейлекене, сутуçăсене 10 процент та тивĕçтермелле. Çак шайлашусене саккунпа çирĕплетмесен нимех те улшăнмĕ. Рынок тесе эпир паян нумай япалана кутăн-пуçăн çавăрса хутăмăр. Çав тупăшура хресчен кăна инкек тÿсет.

Ыйтăвĕ нумай пухăннă. Сăмахран гектар пуçне уйăракан субсидипе халĕ те усăмлăх çук. Тепĕр самант. Пĕр литр дизтопливо туяннă чухне 14 тенкĕ çул-йĕр акцизĕ тÿлеттереççĕ. Каçарăр та, пирĕн тракторсемпе комбайнсем аслă çулсем тăрăх кĕрлеттерсе çÿремеççĕ-çке. Вĕсен ĕç вырăнĕ – уй-хир.

Çирĕм çул каялла ял çыннисене пай çĕрĕсем валеçсе пачĕç те ĕçлĕр терĕç. Мĕнпе? Техника туяма ахаль çыннăн укçа çук. Хуçалăхсем банксенчен кредит нумай илсе тултарнă та ниепле те татăлаймаççĕ.

Омск фермерĕсем патшалăх шайĕнче какай ыйтăвне пырса тивекен техника регламенчĕ йышăннипе кăмăлсăр. Вăл кăçалхи çу уйăхĕн 1-мĕшĕнче вăя кĕчĕ. Унпа килĕшÿллĕн халь килти выльăха харпăр хăй тĕллĕн пусса сутма юрамасть. Выльăх пусса тирпейлекен ятарлă вырăна леçмелле. Килти хуçалăхсем какайăн ытларах пайне парса тăраççĕ. Ку документ хресчене тухăçлă ĕçлеме хавхалантарасси иккĕленÿллĕ.

**Кăларăма Вячеслав ГРИГОРЬЕВ хатĕрленĕ.**

ШУТ-ХИСЕП

## Республикăра 2013 çулта йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерни

Тытăм, процентпа




Вăтамран пĕр çын пуçне, тенкĕпе




Ÿсĕм (2012 çулпа танлаштарсан), процентпа




СĂВĂ СĔВЕМĔ

**Геннадий ЮМАРТ**

### ПАТШАЛĂХ КУНĔ

Чăвашсен – хăйсен уяв!
Халăхăн патшалăх кунĕ.
Пур-ха пирĕн те ялав,
Вăл пире
пĕр танлăх сунĕ.

Юрă-ташăсăр кичем,
Юрă-ташăсăр уяв-и?
Пирĕнпе пĕрле туссем,
Туслăх –
пĕрлĕхĕн ялавĕ.

Вырăс, мари те тутар –
Кашниех Раççей çăл куçĕ.
Пĕр тăванлăн ас тытар:
Туслашма пире
çул уçă.

Сывă пулччăр Чăваш Ен,
Аттесен чĕлхи, ăс-халĕ!
Пул, чăваш, ялан ĕçчен,
Ĕçчене тĕнче ыталĕ.

Шупашкар кÿлли тавра
Çитмĕл çич
чĕлхе янратăр.
Пирĕн Шур Шупашкара
Тĕнчипех курма вăй патăр.

### ÇИНÇЕ

Вун çиччĕ çапать,
Ыраш шăркара:
Вăл вăрлăх сыпать
Кашни пахчара.

Пире çĕр-анне
Çĕн çăкăр пиллет.
Вăл хир ĕçченне
Кÿрет чăн тивлет.

Асамлă самант:
Çие юлнă чух
Çĕре ан амант,
Ĕçе те ан тух!

Ан çап çĕр питне,
Ан тап алхасса.
Хуралтă çине
Ан кай улăхса.

Шап-шурă тумпа
Эс пурăн таса.
Юрла ушкăнпа
Турра чыс туса.

Выля та юрла
Тухса çереме.
Кирлех ку йăла
Пур яш-кĕрĕме.

## Вулавăш

### Валерий МУРАВЬЕВ

# Петĕр, прокурор тата виç çĕр лимон

### Калав

*(Малалли. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте)*

Çие чечеклĕ халат уртса яма ĕлкĕрнĕ Анфиса Герман хушнине итлерĕ. Итлемесĕр. Вăл кирлĕ çын-çке-ха. Юнашар выртса тăма кăна мар. Пурнăçра катăк пуртă та кирлĕ пулать тенĕн ăнсăртран сиксе тухакан васкавлă ĕçсене пурнăçлама çывăх çын кирлĕ. Каччăсене ытлашши тиркенĕрен хĕр чухне хăйне килĕшекен упăшка тупаймарĕ, ирĕке хăнăхса халĕ кампа выртса-тăрас килет, çавна астарать.

"Мĕн, прокурор тесе арçын ăшшисĕр пурăнмалла-и унăн? Прокурор та çын. Ăна та сут çанталăкри пĕтĕм ырлăха курма çуратса янă. Хам япалапа хам хуçа. Кампа йăпанас килет, çавăнпа йăпанатăп. Çынсене мĕн ĕç? Хăйсен ыррăнне лартмалла-ха хăшне-пĕрне. Сăмсине ăçта кирлĕ унта чиксе çӳреççĕ, пуçне ытлашши çӳле çĕклеме пуçларĕç. Вĕрентсе илмеллех. Петĕр пек карма çăварсене чармаллах", – çакăн пек шухăшсемпе Анфиса çывăрмалли пӳлĕме эрехпе çыртмалли йăтса кĕчĕ.

– Вăт наччас пуç юсанать, – шăккалат тыттарнă ача пек хĕпĕртерĕ Герман. Алли тытамак чирĕ ернĕ евĕр чĕтрет, тулли черккене тути патне аранаран илсе пычĕ.

– Çĕр каç калаçнине манман-и? – хăмăр куçне кушакла ялтăртаттарса ыйтрĕ Анфиса.

– Манман, манман. Сан сăмахна епле манăн? Пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулать.

– Темле çав, шан сире.

– Лăпăртатса ан тăр. Тепре часрах ярса пар. Куран, ăш-чик çунса тухать.

Герман тепĕр черкке эрехе те çăварне янк! кăна ӳпĕнтерчĕ.

– Ме, çырт. Выç хырăмла часах ӳсĕрĕлсе каян, – кăлпасси татăкĕ тăсса пачĕ хĕрарăм.

– Русский Иван после второго стакана тоже не закусывает тенине илтнĕ-и? Тепре пар та, çитĕ.

– Тепĕр стопкăпа каллех харлаттарма тытăнан. Памас. Кайса çăвăн. Кайран, кăштах усăлсан, ĕçен.

Герман Анфиса каланине итлерĕ, хирĕçме шутламарĕ. Лăпăр-лапăр хĕрарăм мар-çке вăл – район прокурорĕ.

Ирхи апата ларсан савнисем сăмах вакласа каймарĕç. Кашни хăйĕн шухăш çăмхине сӳтсе çĕнĕрен çăмхаларĕ. Сĕтел хушшинчен тухас умĕн кăна Анфиса икĕ черкке эрех тултарчĕ те тумалли ĕç ăнăçлăхĕшĕн Герман аллинчи черккене чанклаттарса илсе çапла татса хучĕ:

– Ни пуха, ни пера.

– К черту, – тавăрчĕ арçын хура мăйăхне икĕ еннелле шăлса илсе.

– Только смотри, Гяерман. Еще раз предупреждаю. В случае чего çакланастăвас пулсан, я ничего не знаю. Все должно быть шито-крыто. Конечно, я помогу. Не брошу. Старайтесь работать чисто.

***

Германпа унăн юлташĕсем Петĕре хваттерĕнчен тухнă хыççăн сыхлаймĕрлеме тытăнчĕç те вăрманта та пĕр самантлăха куçран вĕçертмерĕç. Ара, ĕçе ăнăçлă вĕçлесен кĕсьене темиçе "лимон" шăнкăрт кăна кĕрсе выртатьçке. Кайран савăнса кăна пурăн. Укçасăр пурнăç – пурнăç мар. Укçапа темĕн те тупма пулать: хĕрарăмне те, эрехне те...

Петĕр çине вĕсем вăрман çăрарах çĕрте тапăнчĕç. Вĕлермех шутланăччĕши Анфисăпа Герман хăйсен "тăшманне", е кăштах "вĕрентсе илме" кăна – çакна арçын ас тумасть, çапах та кӳсеппе ăна пуçĕнчен вилмеллех çапрăм тесе шухăшларĕ. Тăн çухатнăскере, сукмака урлă выртаканскере тапа-тапа хăварса хурахсем чăтлăха тапса сикрĕç.

***

"Таса" ĕçлеме пĕлекен хурахсем пулман иккен Германпа унăн юлташĕсем. Вăтăрмĕш çулсенче хресченсене колхозсене вăйпа çырăнтарнă тапхăрти меслетпе "ухутана" тухнă. Тăр кăнтăрла, вăрман хăлхаллă, уй куçлă чух тискер ĕç тума шут тытнă.

Тепĕр тесен, Герман нихăçан та ĕçе тĕплĕн, пĕлсе, пуçпа шухăшласа туман. Вăл çиччĕ виççе пĕрре касма хăнăхман. Тĕрĕссипе, ĕçре писĕхмен. Эрех тупассишĕн кăна пĕр-пĕр ĕçе çыхăннă вăл. Ытларах чух – хурах ĕçне.

Ашшĕпе амăшĕ вĕрентекенсем пулнă унăн. Хĕрпе ывăл пăхса ӳстернĕ. Германăн аппăшĕ ăслă-тăнлă çын шутне кĕнĕ. Чул хула тăрăхĕнче ачасене вĕрентсе пурăнать. Ывăлĕ çине-çине кулянтарнăранах ĕмĕрĕ кĕскелчĕ ашшĕпе амăшĕн. Вăл иккĕмĕш хут тĕрмере ларнă вăхăтра чĕре чирĕпе сасартăк вилсе çăва çине ăсанчĕç. Герман вĕсене, уншăн темĕн тума та хатĕрскерсене, юлашки çула та ăсатайман.

Пĕрремĕш хут тĕрмене вăл çара каймасăр ят тухас умĕн çакланнăччĕ. Акатуй кĕрленĕ вăхăтра Сăр хĕрринчи вăрманта юлташĕсемпе ял хĕрне "активсе" пăхма шут тытнă. Германа черет çитиччен вĕсене милиционерсем ирсĕр ĕç тунă вырăнтах ярса илнĕ. "Хĕре мăшкăланăшăн мар, ухмахла лекрĕм", – тетчĕ кайран хурах.

Иккĕмĕш хутĕнче Герман тĕрмене пырне чараймасăр лекрĕ. Ирĕке тухсан тепĕр уйăхранах юлташĕсемпе эрех лавккине çаратма кĕнĕ. Ку хутĕнче те ăна çиччĕ виççе пĕрре касманни пĕтернĕ. Ара, уншăн яланах ашшĕпе амăшĕ шухăшланă та вăл кирлĕ-кирлĕ маршăнах пуç ватман.

Хурахла ĕçĕн йĕрне-шывне çухатасси çинчен хальхинче те шухăшламарĕ çав Герман. Хурах ĕçне ача вăййи тесе шутларĕ-ши? Уншăн пулсан пырне эрехпе çуса хĕрарăм çумĕнче çемçе тӳшек çинче канлĕн çĕр касса пултăр...

***

...Килне Вадим вăрман сукмакĕпе тӳррĕн таврăнма шут тытрĕ. Пулла хĕвел тухиччен кайнăччĕ. Арăмĕ ăна нумай ларма хушмарĕ пулин те, пулă лайăх кĕнĕрен вăл кăнтăр иртнине те сиссе юлман. Сехечĕ çине пăхса илчĕ: пĕр сехет çитет иккен. Вăлтисене хăпăл-хапăл пуçтарса велосипедне утланса ларчĕ те хула еннелле вĕçтерчĕ. "Хăвăртрах, хăвăртрах, – васкатрĕ пулăç хăйне. Ара, паян ун дачăран çĕр улми турттарса тухмаллаччĕ-çке. Ăна михĕсене тултарса лартнă, вăрласа каяс хăрушлăх пур. – Самани айĕн-çийĕн çаврăнса кайрĕ. Çăрапа питĕрнине нимĕн вырăнне те хумаççĕ. Банксене ним мар çаратаççĕ те, дача çăри вăрăсемшĕн пĕрре сурмалăх кăна. Кашни çурт умне милици тăратса тухсан та чарайместăн пуль. Вадим ача чух пӳрт алăкне çăрапа нихăçан та питĕрмен. Халĕ хваттере самантлăх уçă хăвар-ха, çие тăхăнмалли кĕпе-йĕмсĕр тăрса юлăн. Виç-тăватă кун каялла Мĕтри Ваççукĕнне, Вадимăн кӳршинне, дачăран çичĕ михĕ çĕр улми пĕçертсе кайнă. Хăть ларса макăр. Çăвĕпе ана çинче чакаланатăн та юлашкинчен нимсĕр тăрса юлатăн. Арăм çапса пăрахать ĕнтĕ, чĕррĕнех кăшласа ярать. Çĕр улми çухалнă пулсан вара киле пырса ан кĕр..."

Шухăшсемпе çапăçса, урипе велосипед педальне пĕтĕм вăйран тапса пыракан Вадим сукмак урлă выртакан çынна вăрманти çулăн черетлĕ авăнкăçĕнчен пăрăнсанах асăрхарĕ. "Пĕр-пĕр ӳсĕр çын канса выртать пулĕ-ха", – шухăшларĕ вăл.

Çул ансăррине пула çын выртакан вырăнтан чарăнмасăр иртсе каяймарĕ. "Ӳсĕр çын мар пуль ку. Çапса пăрахманши? Çăварĕнчен юн тухнă", – хăйне хăй мăкăртатрĕ Вадим.

Вăл, çынна инкекре пулăшу памасăр хăварма хăнăхманскер, палламан çамрăкăн аллине асăрхануа тытрĕ, юн таппине шыраса тупрĕ. "Чĕрĕ! Чĕри вăраххăн тапать. Анчах мĕнле тата мĕнпе пулăшмалла? Вăрăмскере велосипед çине хурса каяймăн. Хулана йăтса та çитерейместĕн".

Йĕри-тавра чакаксем чакăлтатни те пăшăрхантарчĕ ăна. "Кайăк-кĕшĕк тапăнса куçне кăларса илĕ, сăхса пĕтерĕ..."

Вадим çийĕнчи çил яман курткине хывса вăрманти нӳрлĕ çĕр çине сарчĕ. Аманнă çынна асăрханса хускатма тăчĕ. Петĕр асаплăн йынăшса илчĕ. "Чим-ха, эпĕ ку çамрăка таçта курнă мар-и? Ăçта пултăр? Хамăр хуларах ĕнтĕ. Ют çын пĕлмен çулпа мĕн туса çӳретĕр? Хурах е таркăн мар пуль. Хăмăр пиншакăн малти кĕсйинче шариклĕ авторучка пур. Шалти кĕсйине чиксе пăхас. Блокнот пур иккен. Хĕрлĕ хуплашкаллă удостоверени кĕнеки. Милиционер мар пулĕ те? Халĕ вĕсем нумай хунаса кайрĕç".

Кĕнекене çавăрса пăхрĕ. Ун çине ылтăн тĕспе çырнине вуларĕ: "Союз журналистов СССР".

"Акă кам иккен. Журналист. Çуркунне Вадим ĕçлекен стройкăна пырса репортаж çырса кайнă корреспондент. Хăмăр пиншакĕ те, МММ тесе çырнă ăшă свитерĕ те çавах. Мăйăхне хырса пăрахнă та çавăнпа çийĕнчех палласа илеймерĕм – Петр Иванович Гремячев". Райхаçатра пичетленсе тухнă унăн чылай çивĕч статйине кăсăкланса вуланăччĕ вăл. Республика хаçатĕнче кăçал пичетленнĕ пĕр статйи вара районти пĕтĕм халăха тĕлĕнтерсе янăччĕ. Унта район прокурорĕн саккуна хирĕçле ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларнăччĕ. Ара, прокурорăн, саккуна пăснине тĕрĕслесе тăма патшалăх шанса лартнă çыннăн, хăйĕн саккун хӳтĕлевçи пулмалла-çке...

Петĕре курткăпа витсе хăварса Вадим хулана çил пекех вĕçтерчĕ. "Хăвăртрах çитмелле. "Васкавлă пулăшăва", милицие пĕлтермелле. Вилсе ан кайтăрччĕ кăна..."

Васканипе Вадим шĕшкĕ тĕмми çумĕнче выртакан кӳсеке асăрхаймарĕ.

***

Телефон пĕр чарăнмасăр шăнкăртатрĕ.

– Черт знает што. Выходнойĕнче те канаймастăн, – вырăн çинчен тарăхуллăн тăрса утрĕ Анфиса. – Алло. Слушаю. Да. Я. Ну, что там еще стряслось? Журналист? Ну и выезжайте. Звоните к Юрию Васильевичу. Он же помпрокурора. Примите меры и расследуйте. Все. Мне некогда. Вас много, я одна.

Прокурор кĕпçене йывăр ĕç тунă хыççăнхи пек халтан кайнă çынла хучĕ. "Наконец-то шăпи тулчĕ-ха. Кур-ха ăна, прокурора хирĕç тăрать. Молокосос. Малтан сăмса шăлма вĕренмелле, кайран... Путем çырма пĕлмеç, журналист тесе пуçне каçăртса çӳреç..."

Сăрçи хулинче район прокурорĕнче ĕçлеме сĕнсен турткалашса тăман, пĕр сăмахсăрах килĕшнĕ. Влаç çынна пăснине Анфиса студент чухнех сиснĕха. Хăй те çав çулпа каяссине тĕлленмен те.

Малтанласа Сăрçи хулинчи пурнăç лăпкăн иртсе пынă. Йăлари яланхи саккуна хирĕçле ĕçсем. Хушăран çынна вĕлерни те пулкаланă. Кун пек "ĕçсене" те хĕрарăм прокурор кал-кал татса панă. Ĕçе тĕпчене, суд тунă, преступнике тĕрмене ăсатнă. Конвеерпа. Пĕрин хыççăн тепри кирпĕч шутлама кайнă. Вĕсем кайнă. Айăплисем те, айăпсăррисем те. Айăпсăррисен шăпи прокурора пăшăрхантарман.

*(Малалли пулать).*

## ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Тунти кун, утă уйăхĕн 14-мĕшĕ**

18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
19.00 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «КАЧЕСТВО» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.30 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
23.45 «КАЧЕСТВО» (12+)

**Ытлари кун, утă уйăхĕн 15-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «ТЕАТРА МАН ПЕКЕХ ЮРАТĂР». ВЕРА КУЗЬМИНА (0+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
20.30 «МОДНАЯ СВАДЬБА» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
23.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)

**Юн кун, утă уйăхĕн 16-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЯЛАН ЯНРА, ЧĂВАШ СĂМАХĔ» (0+)
19.00 «КАÇХИ ТĔЛ ПУЛУ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ЗАПОВЕДНЫЕ МЕСТА ЧУВАШИИ» (6+)
20.40 «ОДИН ДЕНЬ С ПРОФЕССИОНАЛОМ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.45 «ОДИН ДЕНЬ С ПРОФЕССИОНАЛОМ» (12+)

**Кĕçнерни кун, утă уйăхĕн 17-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЯЛАН ЯНРА, ЧĂВАШ СĂМАХĔ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «НАОБУМ» (12+)
20.45 «АКТУАЛЬНОЕ ИНТЕРВЬЮ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
23.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «НАОБУМ» (12+)

**Эрне кун, утă уйăхĕн 18-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЯЛАН ЯНРА, ЧĂВАШ СĂМАХĔ» (0+)
19.00 «ЭХ, ЮРРĂМ ЯНĂРА» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «БУХТЫ БАРАХТЫ» (6+)
20.30 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (6+)
21.00 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.30 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
00.00 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (6+)

**Шăмат кун, утă уйăхĕн 19-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЯЛАН ЯНРА, ЧĂВАШ СĂМАХĔ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
9.00 «НА ОЛИМПЕ» (6+)
9.30 «БУХТЫ БАРАХТЫ» (6+)
10.00 «РАСПИСАНИРЕ ÇУК ПУЙĂС». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
17.00 ФИЛЬМЫ VII ЧЕБОКСАРСКОГО КИНОФЕСТИВАЛЯ. «...ШТРИХ... ПУНКТИР... . ГЕННАДИЙ ОВСЯННИКОВ». РЕЖИССЕР ДМИТРИЙ МИХЛЕЕВ (12+)
18.00 «РОДНИКИ РОССИИ». ТЕЛЕВЕРСИЯ (6+)

**Вырсарни кун, утă уйăхĕн 20-мĕшĕ**

9.00 «НА ОЛИМПЕ» (6+)
9.30 «КАПКĂНРИ КАПКĂН». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «ЭХ, ЮРРĂМ ЯНĂРА» (12+)
17.30 «ПРЕСТУПЛЕНИЕ И НАКАЗАНИЕ». СПЕКТАКЛЬ ПО РОМАНУ Ф.М. ДОСТОЕВСКОГО (16+)

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Утă, 9 – юн кун | Утă, 10 – кĕçнерни кун | Утă, 11 – эрне кун | Утă, 12 – шăмат кун | Утă, 13 – вырсарни кун | Утă, 14 – тунти кун | Утă, 15 – ытлари кун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 4.16 | 4.17 | 4.19 | 4.20 | 4.21 | 4.23 | 4.24 |
| | анать | 21.35 | 21.34 | 21.33 | 21.32 | 21.31 | 21.29 | 21.28 |
| Кун тăршшĕ | | 17.19 | 17.17 | 17.14 | 17.12 | 17.10 | 17.06 | 17.04 |
| УЙĂХ | тăхри | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулли уйăх (15.24) | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 12-мĕш кун | 13-мĕш кун | 14-мĕш кун | 15-мĕш кун | 16-мĕш кун | 17-мĕш кун | 18-мĕш кун |
| | | Ухăçă паллинче | Ухăçă паллинче | Ту качаки паллинче | Ту качаки паллинче | Шыв тăкан паллинче | Шыв тăкан паллинче | Пулă паллинче |

### МУЗЫКА ИНСТРУМЕНЧĔСЕМ

# Чăваш кĕсли



*Аслă Атăл урлă, Атăл шывĕ майĕ,*
*Вăрман витĕр кайĕ мухтавлă яту,*
*Кĕсле кĕвви саслăн янраттарса кайĕ*
*Уйăхăн-хĕвелĕн çунĕ хăвату...*

Чăвашсен хĕрӳ чĕреллĕ поэчĕ Çеçпĕл Мишши тăван чĕлхе хăватне кĕсле кĕввипе танлаштарни çак музыка инструменчĕ пирĕн халăх пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнни çинчен калать.

Хăйĕн тепĕр сăввинче поэт харсăр чунчĕре пăлхавне витĕмлĕрех уçса парас тесе каллех кĕсле кĕввипе усă курать:

*Çĕнĕ çул! Кун-çул! Çĕн кун килет,*
*Çавна кура – кĕвĕллĕ чун,*
*Кĕсле кĕввиллĕ вутлă юн...*

Пирвайхи кĕслесем çав тери ансат пулнă, вĕсем ахаль хăма çине карăнтарса хунă хĕлĕхсенчен çеç тытăнса тăнă. Каярахпа хĕлĕхсене хытăрах янăрама виçĕ кĕтеслĕ ешчĕк çине куçарнă.

Кĕсле евĕрлĕ музыка инструменчĕсем ытти халăхсен те пур. Сăмахран, карелсен – кантеле, украинсен – бандура, белоруссен – цымбал, тувинецсен – чатаган, авалхи грексен – арфа тата ыт.те. Вĕсем тĕрлĕ саманасенче çуралса е пĕр халăхран тепĕр халăха куçса хăйсен çулĕпе аталанса пынă.

Çырулăх палăкĕсенче чăваш кĕсли çинчен асăннисем XVII ĕмĕртех тĕл пулаççĕ. Тен, вĕсем халăх хушшинче авалрах та сарăлнă. Анчах истори палăкĕсем çителĕксĕр пулни пире çакна çирĕплетсе калама май памасть.

Чăваш кĕслин XIX ĕмĕрти кун-çулĕ çинчен Спиридон Михайлов нумай çырса хăварнă.

«Чăвашсем çав тери чаплă кĕслесем тăваççĕ, – çырнă вăл, – вĕсене ял хуçалăх выставкине кăларса тăратсан та намăс пулас çук».

Ăстасем кĕслене хăйсем валли çеç мар, сутлăх та тунă. Хĕлĕхсен шучĕ çирĕм пиллĕкрен пуçласа вăтăр пиллĕке çитнĕ. Корпусĕсем хăйсен илемĕпе ялкăшса тăнă.

Кĕсле тăвакан ăстасем уйрăмах Оринин чăвашĕсем хушшинче йышлă пулнă. Вĕсем хăйсен пултарулăхĕпе Чикме уесĕнче çеç мар, пĕтĕм Хусан кĕпĕрнипех чапа тухнă.

Спиридон Михайлов тата акă мĕн палăртать:чăвашсем кĕсле тĕлĕнмелле ăста калаççĕ, вĕсен хушшинче Мускавра ĕçлекен паллă кĕслеçĕсем те пур.

Писатель Етĕрне уесĕнчи кĕслеçĕсене чи ăста та пултаруллисен шутне кĕртет. Вĕсем вырăс ташшисене, вăйă юррисене, вальссене, хĕвел анăçри хăвăрт кĕвĕсене те чаплă шăрантараççĕ иккен. Вырăссен «барыня» ташшине вара кирек хăш кĕслеçĕ те калама пултарать.

Музыкантсен пултарулăхĕ пирки Спиридон Михайлов çапла та çырать: «Чăвашсем хăйсен ачисене мĕн пĕчĕкрен музыкăпа явăçтарма тăрăшаççĕ. Ачасене ятарласа пĕчĕк тата йӳнĕрех кĕслесем туса параççĕ. Вĕсенчен чи пĕчĕккисем вун пилĕк хĕлĕхлĕ. Хăш-пĕр ăстасем тата хăйсен ачисене те кĕсле тума вĕрентеççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ чăвашсем хушшинче ăста кĕслеçĕсем йышлинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук».

Виçĕ революцие хутшăннă Максим Булочников та Оринин таврашĕнчи кĕслеçĕсен пултарулăхĕ çинченех çырать: «Пирĕн активистсенчен пĕри – Котельников хресчен кĕслесем ăста тăватчĕ, вĕсене яланах пасара илсе тухса сутатчĕ. Пĕрре анчах мар пирĕн юлташсем революциллĕ литературăна – брошюрăсемпе листовкăсене – кĕслесем ăшне пытарса пасара илсе тухнă».

1865 çултан пуçласа чăваш кĕслисене тăтăшах вырăс музейĕсемпе выставкисенче кăтартма пуçлаççĕ.

Н.В.Никольский профессор каланă тăрăх тата акă мĕн паллă: пĕрремĕш тĕнче вăрçи умĕн чăваш кĕслисене Мускаври тата Хусанти музыка инструменчĕсенчен лавккасенчен ют çĕр-шывсенчен илсе килнĕ кĕслесем тесе улталаса сутнă.

Иртнĕ ĕмĕрти вăтăрмĕш çулсенче халĕ Çĕнĕ Шупашкара кĕрекен Ольтикассинче кĕсле тата ытти музыка инструменчĕ тăвакан Матвей Филиппович Филиппов ăста чапа тухать. Пĕтĕм Союзри радио передачисенче те ун çинчен каласа панăччĕ. Вăл тунă кĕслесем Мускаври тата Парижри выставкăсенче пулнă.

Чăвашсен малтанхи композиторĕсемпе юрăçисен килĕсенче пурин те тенĕ пекех кĕсле пулни те çак музыка инструменчĕ халăх хушшинче анлă сарăлни çинченех калать.

Чăваш халăх юрăçин Гаврил Федоров килĕнче те кĕсле пулнă. Федор Павлов композитор ашшĕ те кĕсле ăста каланă.

Чăваш кĕсли çĕр-шывра колхозсем тунă çулсенче те хăй пĕлтерĕшне çухатман.

Ялсенчен ытлашши аякка тухса çӳрекен кĕслеçĕсем сахал мар пулнă. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Турханкассинчи Павел Морозов, Муркаш районĕнчи Турай Çулаври Василий Гаврилов-Каккăрсем, Красноармейски районĕнчи Упири Василий Спиридонов, Элĕк районĕнчи Ураскильтри Мартын Ваçанкка, Шупашкар районĕнчи Кӳкеçри Анатолий Михопаркин, Андрей Овчинников, Георгий Алексеев чăваш кĕслин шайне ялан çӳлте тытнă...

**Иван КОНСТАНТИНОВ.**

### «ПАХЧАÇĂ КАЛАВĔСЕМ» ЯРĂМРАН

# Йӳççи кайăксене те илĕртет

Паччушки, усалсăр ырă çук-çке.

Аптрамалла кĕрхи çанталăкпа: пĕрре сивĕтет, тепре ăшăтать. Патшана та пăхăнмасть, тиеке те тăхтамасть тенĕ тет ĕлĕк ăна. Халĕ вара никама та итлемест. Чип-чипер эрнесем хыççăн виçĕ кун юрпа хутăш çумăр юхтарчĕ, каçсерен шăнтрĕ. Юлашки каç самай хытă шăнтрĕ тата. Эй, шанма çук ăна, кĕске ăслă. Тепĕр кунхине хĕвел кулса ячĕ те – хуллен ăшаларĕ кăчăр пулнă сивĕ çĕре. Çĕрле лĕп çил ачашлама пуçларĕ.

Икĕ кун иртрĕ çапла. Текех хваттерте чăтса лараймарăм, ирхине ирех пахчана вĕçтертĕм. Арăм та ăнланать: унта ĕçсем юр ӳксен çеç вĕçленеççĕ. Пĕлейместĕп, арçын пуçпа те хамăр шыратпăр тĕрлĕ вак-тĕвек ĕçе, те килтен хăпса тарас килет?..

Троллейбусран антăм та васкамасăр утатăп. Утма çул тип-тикĕс. Хĕвелĕ çунтарать. Çапах та кĕрхи вăрман кичем. Хутран-ситрен шур аяклă чакаксем чаклатса илеççĕ, чанасем чанккаса вĕçкелеççĕ. Çынсем те курăнмаççĕ. Пирĕн пахчара шăп-шăпăрт. Хăмла çырли тĕмĕсем яшланнă – çап-çутă хăмăр.

Пĕчĕк хапхаран кĕтĕм те тăратăп хайхи. Чим, пахчан сылтăм кĕтесри палан тĕмми çинче пĕчĕк туратсем силленкелеççĕ. Тем çăтăл-çатăл тăвать. Ик-виçĕ палан çупкăмĕ сулланса тăрать. Икĕ пĕчĕк кайăк унтан вĕçсе тухрĕç те юнашарти улмуççи турачĕ çине ларчĕç. Эй, лармарĕç те вĕсем: сиккеле-сиккеле çинçе сасăпа чавлатаççĕ, пĕр-пĕрне хăвăрт-хăвăрт сăхаççĕ, çуначĕсемпе çапаççĕ. Тĕк вĕçет! Вĕтĕ-вĕтĕ мамăк пĕрчисем çĕре те вĕççе анмаççĕ: пĕтрĕ пуç! Çамрăк чух эпĕ ялта хур аçисем çапăçнине курма юрататтăм. Вĕсен янкама сассине илтсен ялăн пĕр пуçĕнчен тепĕрне ним мар чупса каяттăм. Ку – тĕлĕнтермĕш! Хурсен сăмсисем те, мăйĕсем те, урисем те çапăçаççĕ. Çуначĕсем мĕн тăваççĕ?! Калама сăмах çитмест: чĕлхе чухăн. Халь-халь татăлса ӳкес пек çатлатаççĕ çунатсем. Кунта тĕк тăпăлать, какайĕ-мĕнĕпех йăтăнать. Лӳп-лӳп, лӳпиççе, ĕçлениççе, кукиççе!

Кусем мĕнле кайăксем-ши? Тĕсĕпе çерçи пекех. Анчах вăл мар, пĕчĕкрех: çур шит чухлĕ пуль. Хитре. Хӳри кĕске. Çунатти çутă хура, шурă йĕр пур. Пуçĕ, мăйĕ, кăкăрĕ тата аякĕсем кĕрен сарă тĕслĕ. Вырăнĕ- вырăнĕпе хура йĕрсем те палăраççĕ. Куçĕ патĕнче хура. Çурăмĕ – сарă хăмăр.

Хытă çапăçрĕç. Тĕк чăл-чăл вĕççе тăчĕ. Ывăнчĕç. Иккĕшĕ те çĕре ӳкрĕç. Кунта та пĕрпĕрне сăхкалаççĕ-çке-ха. Мĕнешкел тăшмансем! Çак самантра куçĕсем мĕн тĕслĕ-ши? Вăт мыскара. Таçтан вăй тупрĕç – улмуççин аялти турачĕ çине вĕççе хăпарчĕç. Усăннă çуначĕсене хускатаççĕ. Пĕри ытларах ывăннă пулас – тарчĕ. Эй-ай, вĕçеймест вĕт. Аялтан çеç, енчен енне сулăнкаласа, кукăр-макăр туса аран вĕçет. Пахчаран вĕççе тухмарĕ, карта çине ларчĕ. Тепри хăй вырăнĕнчен тапранмарĕ. Хускалмасть те. Сĕнк пулчĕ пулас. Ун еннелле алăпа сĕлтсе пăхрăм та – йăшăл тумарĕ: çывăрса кайнă. Карта çинчи кайăка лайăхрах курас тесе пуça çеç пăртăм, алăк çумĕнче кӳршĕ Петĕр тăра парать. Вăл та кайăксем çапăçнине пăхса шалт аптраса ӳкнĕ-мĕн.

– Эсĕ мĕн?.. – сăмах пуçланăскере тӳрех пӳлтĕм эпĕ.

– Вăт-т, па-араççĕ, – рехетленет помидор ăсти. – Кайса ӳксе, урисене çӳлелле тăратса выртиччен тăнклаттараççĕ вĕт пĕр-пĕрне. Пĕр хĕрхенӳ çук. Тем пайлаççĕ. Эсĕ ĕçтерсе ӳсĕртрĕн-им?

– Эх, панкав, – пăрăнатăп унран. – Ӳкерсе илмеллеччĕ вĕсене...

– Тăхта, – йăл-йăл кулать Семенов. – Ӳкересси тарама-ха. Ăçтан тупăнчĕç вĕсем?

– Палан çинчен вĕççе анчĕç.

– Апла пурте паллă, – тăрук лăпланчĕ кӳршĕ. – Палан çырли çинĕ вĕсем. Сивĕсем хыççăн миçе кун ăшă тăрать. Çырласем йӳçме пуçланă. Кусемшĕн шăп та лăп чун киленĕçĕ пулнă. Эх, хĕрĕнкĕ пуççем...

– Кайăксем мĕн ятлă хăть?

– Виссари свиристель терĕ...

Чăвашла ятне Çемен пĕлмерĕ. Киле çитсен те словарьсенче шырарăм – тупаймарăм. Университета чăваш чĕлхин кафедрине Чернов ăсчах патнех çитрĕм. Вăл пĕлет иккен. «Шăлинкурăс» терĕ. Мĕншĕн апла каланă – хуравлаймарĕ.

Çапла ĕнтĕ, ĕçкĕççене темле ят та тупса хураççĕ. Чăн та, курăс тени питĕ килĕшет кусене. Пĕр-пĕрне çапса, сăха-сăха мĕн тери курăсланса кайрĕç вĕсем! Палан çырли йӳçсе тăрать пулсан çав тутлă марскере мĕншĕн тĕкĕнмелле ăна? Илĕртет пуль çав. Йӳçĕ япала этеме те хăй патне туртать-çке. Мĕнле илĕртет тата. Вара тыткăнлать, çапăçтарать, ухмаха кăларать.

Тем те курăн пушă пахчара.

**Герман ЖЕЛТУХИН.**


### РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

**ПРОДАЮ**

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – **33** руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**23. Гравмассу, песок, бой кирпича,** щебень. Доставка. Тел. 89061355241.

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

**464. Косилки, грабли, окучники,** пресс-подборщики, картофелекопалки. Доставка. Т. 8-937-956-00-54.

**472. Гравий, щебень, песок, гравмассу,** торф, перегной, чернозем, асфальтную крошку, опилки. Т.: 8-906-132-63-78, 484161, 8-919-652-69-02.



**«ХРЕСЧЕН САССИ»**
**Обществăпа политика хаçачĕ**
**Индекс 54838**
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

**ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – А.П. ЛЕОНТЬЕВ**
**Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)**
Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 [1] регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АОУ типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

**Графикпа 17 сехетре алă пусмалла. 17 сехетре алă пуснă.**
**Заказ 2487**
**Тираж 3654**

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем явапла.